С(Чув)
А 94
20092.чув.
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР

# АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

## СĂВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-020092
М 20092 чув



К С(чув)
А 94

# АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ

## СĂВĂСЕМПЕ ПОЭМĂСЕМ

*СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ*

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1975

С(Чув.)2
А 94

ПРОВЕРЕНО
27 ОКТ 2017

м 20092-чув

Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького

А $\frac{0743 — 0138}{М 136 (03)—75}$ 76—75

© Чувашское книжное издательство, 1975 г.

## ПОЭЗИ ХИРНЕ ЫЛТĂН ВĂРЛĂХ АҪАТЬ

1940 ҫулхи ҫуркунне. Советсен ҫурчĕн мăн залĕ. Чăваш ҫыруҫисемпе тĕрлĕ енчен килнĕ хăнасем аслă Ҫ. В. Иванов ҫуралнăранпа ҫур ĕмĕр тултарнине палăртаҫҫĕ. Чаплă сăвăҫ вилнĕренпе 25 ҫул иртнĕ ĕнтĕ, анчах та унпа пĕрле Чĕмпĕрте вĕреннĕ, ĕҫленĕ тусĕсем сăвăҫа лайăх астăваҫҫĕ-ха, хăйне курма ĕлкĕреймен шăллĕсем вара ăна «Нарспи» сăнарĕсем витĕр ҫураҫҫĕ — вĕсен умĕнче Ҫонстантин Васильевич Иванов, манми Слакпуҫ чăвашĕ.

Тăхтав вăхăчĕсенче шавлă калаҫу пырать. Ҫыруҫсем пĕр-пĕринпе паллашаҫҫĕ, кĕнекесем ҫыра-ҫыра параҫҫĕ. Ман ума ача чухне кĕлте урапи айне пулнипе курпун тăрса юлнă лутра ҫын, унпа пĕрле ҫинҫешке, араб ачи пек хуп-хура кăтра ҫамрăк пырса тăраҫҫĕ. Пăхатăп та лутри ҫине, мана ҫавăнтах ун юмахĕсемпе калавĕсен ячĕсем аса килеҫҫĕ: «Лапшу Ҫтаппанĕ», «Упа тытни», «Арăслан тытни...» — нумай каласа кайма пулать. Эпир ҫак тĕлĕнмелле ҫырнă «Сунарҫă халапĕсен» авторне хăй пурăннă чухнех пĕри шӳтлесе, тепри чăнласах классик теттĕмĕр. Халĕ, акă, ҫак статьяна ҫырса ларатăп та, Ҫуҫма Чулкаҫăн кĕнекисене ҫĕнĕрен пăхса тухрăм, ăна чăнласа классик текеннисем питĕ тĕрĕс каланă иккен.

Ахваниҫ Ҫуҫми (тепĕр чухне Чулкаҫ ҫаплă та алă пусатчĕ) мана хура чăваш ачипе паллаштарчĕ:

— Ман хушаматлă Афанасьев Элекҫей. Эсĕ, ху вăрăм пулин те, ку ача пĕчĕккине ан пăх, вăл вунпиллĕкре кăна-ха, анчах та пыра-киле вăл сăвăҫ пулса тăрать. Хăвах курăн, Ҫуҫма Чулкаҫ нихҫан та суйманнине пурте пĕлеҫҫĕ.—Хăй яланхи пек ӳсĕркелесе илчĕ, шăлаварне

хăпарткаланă пек, пиншак аркине турткаланă пек турĕ.

Хура ача чĕкĕнтĕр пек хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ, сăмса витĕр илтĕни-илтĕнми ӳпкелесе илчĕ:

— Куçма пичче, сăвăç умĕнче çав тĕрлех ан вăтантар-ха...

— Ачам, литературăна хăюллăн та шавлăн пырса кĕрес пулать, ӳпре сасси никама та илтĕнмест!

Эпир виççĕмĕр те кулса ятăмăр.

Çав вăхăтранпа вара 35 çул иртсе кайрĕ, Алексей Афанасьев хăй чăн сăвăç пулнине кăтартса пачĕ, йышлă та паха сăвви-поэмипе çирĕплетрĕ.

Аллă çул ячĕпе хатĕрленĕ сăвăсемпе поэмăсен çак кĕнекинче сăмах пурнăçпа çын тивĕçĕ, шăпипе кунçулĕ çинчен пырать. Çын хăй ĕмĕрне ахаль ан ирттертĕр, мĕн ĕçлесе пурнать — кирек ăçта та тарăн йĕр хăвартăр, ун çинчен юрă хахать çӳретĕр, усалли-тĕселли ан пултăр, пулсан та, тĕтре пек, сирĕлтĕр... Афанасьев Элексей кĕнекинче тĕп шухăш çак пулса тăрать. Тата ун çумне пурнăç хавасне, ĕç пафосне хушас пулать. Çакă пурте поэт чĕри витĕр тухнă. Кĕмĕл тĕпренчĕкĕнчен кĕмĕл укçа пулса тăрать. Сăвăра та çаплах. Кăмăл тураменчен кăмăл çулăмĕ ялкăшма тытăнать.

Кузьма Афанасьевич Афанасьев-Чулкаç хăй пек хушаматлă çамрăкпа паллаштарни часах ĕçпе вăй илме тытăнчĕ. 1943 çулта çамрăк сăвăçа Аслă вăрçа чĕнеççĕ, унччен, пĕр çулталăксем маларах, ман пата унăн «Телей уççи» поэми килсе çитет (эпĕ ун чухне Чăвашгизра литература секторĕн аслă редакторĕ пулса ĕçлеттĕм). Поэмахалап мана килĕшрĕ. Поэт Ырăпа Усал хушшинчи ĕмĕрхи тытăçăва кăтартса парасшăн пулнă. Паттăр çамрăк пике-хĕре юратать. Ырă Усала çĕнтерет. Туй та çуй пулса иртет. «Телей уççи» тупăнать.

Алексей Афанасьев малтанхи çулсенче, кашни-пĕр çамрăк сăвăç пекех, такăнкалатчĕ пулсан, халĕ, çитĕнсе çитсен, вăйпиттине кĕрсен, поэзи хирĕнче хăюллăн, шанчăклăн, тумхаха лексе такăнмасăр утма тытăнчĕ, кăкăр

умне çакнă аслашшĕсемпе асламăшĕсен сарă кунтăкĕнчен — сăмах миххинчен тейĕпĕр — кĕмĕл пĕрчĕ сапма тытăнчĕ, кĕмĕл хушшинче ылтăн пĕрчĕсем те йăлтăртатса илчĕç.

Ман сăмахăм, ман шухăшăм ахаль ан пултăр, кĕтмен çĕртен каланă пек ан туйăнтăр тесе, эпĕ хамăн кĕçĕн юлташăн çак пĕчĕк томĕ патне таврăнăп, тĕслĕхсем илсе кăтартăп.

Сăвă-поэма кĕнеки «Тăван çĕршывăма, Юратнă çĕреме Паратăп сассăма, Паратăп чĕреме» халалупа, тăвата йĕркепе, уçăлать. Ай-хай лайăх каланă-çке! Пушă деклараци мар ку, сарлака чунлăн, ывăл ятне илтсе пархатарлă туйăмпа каланă сăмах.

«Çуралнă çĕршывра» ятлă пуçламăш сăвăри икĕ строфана илетĕп:

Вăйлă, теççĕ вăйлисем пире —
Пирĕн вăй, чăнах та, иксĕлми.
Вăйсăр çын, пиçен шăтман çĕре
Сад лартса, ӳстермĕ панулми...

Чăн та, Шиллерпа Некрасов каланă пек, шухăшшăн вырăн ирĕк, сăмахшăн — хĕсĕк.

Аслă, теççĕ пирĕн халăха.
Аслине пĕлсе калать этем.
Çĕрĕ-шывĕ аслă мар-и-ха?
Аслă мар-и сăрчĕ-тăвĕсем?..

Афанасьев çырулăхри тус-йышĕ пек чăвашсен тĕп хулинче мар, хăй çуралса ӳснĕ Тăмпарлăра чылай вăхăт хушши пурăнать, унтан район хулине çити анчах — Бавлăна — куçать.

Çуралса ӳснĕ тăван кĕтесре пурăнни ăна тăван тавралăха витĕртерех курма, туйма, ун улшăнса тăракан сăрне астума, хут çине ӳкерсе илме, ратне-хурăнташпа, ялйышпа, ĕç паттăрĕсемпе çывăхрах паллашма, туслашма пулăшать. Шăпах та çакă ĕнтĕ поэта çӳлерех асăннă сăвă йĕркисене пиллет. Тата тăван кĕтесĕ урлă Афа-

насьев пĕтĕм аслă çĕршыва, Совет Союзне курать. Сăвăçшăн ял трибуни çĕршыв трибуни пулса тăрать. Çак ăнлану патне çитме ăна тăван кĕтесĕ: Тăмпарлă сăрчĕтăвĕ, шывĕ-шурĕ, уйĕ-хирĕ, улăхĕ-вăрманĕ, ту айĕнчен тапакан шăнкăр çăлĕ, хĕвел е уйăх шевлиллĕ кӳлĕ,—паллах, халлĕхе вăй парса тăрать. Сасартăк кĕтмен сăнсем, танлаштарусем, çунатлă эпитетсем, шухăшлă метафорăсем шурă хут ани çине килсе вырăн йышăнаççĕ. Çакă вăл тăван кĕтесĕпе халăха хытă юратнинчен, курни-пĕлнинчен, поэт куçĕпе, чунĕпе сăнама, туйма пĕлнинчен килет.

Акă, çумăр хыççăнхи кĕске саманта кăтартакан сăвă. Тавралăх ешерет, чĕрĕлет, тулли кăкăрпа сывлать, кайăк-кĕшĕк çут тĕнчене мухтаса гимн калать. Пĕр енче хĕвел, тепĕр енче инçе чакса кайнă çумăр. Асамат кĕперĕ карăнса тăрать. Поэт ăна мĕнле курать? Акă мĕнле:

Асаматăн ылтăн пĕккине<br>
Ман кĕсле тăвасчĕ калама!

Ай-хай чаплă каланă-çке! Хам алă пусăттăм та, сăвви манăн мар.

Юрату йĕркисем, интимлă туйăма кăтартакан сăввисем мĕнлерех-ши Афанасьевăн? Сĕре вăрттăн-ши, питĕрĕнчĕк-ши (камернăй-ши) вĕсем?

Акă, куç айне тĕл пулнă тăватă йĕркене илетĕп:

Вăрман пек янрать эс таçта юрлани.<br>
Чулту пек эс чăтăмлă, тусăм, савни!<br>
Тӳпе-ĕмĕтӳ, каç пек вăрттăн куçу,<br>
Уй-хир кĕвви евĕр ачаш калаçу...

Пирĕн анлăрах шухăшламалли çеç юлать, çак хĕссе каланă йĕркесене питĕ нумай шухăш кĕнĕ, ĕçпе кĕрешӳри чăтăмлăх та, арçынпа хĕрарăм хушшинчи çепĕç туйăм та — пурте пур кунта.

Акă тепĕр сăвă, автор ăна «Пирĕн ял» тесе ят панă. Малтанхи пилĕк йĕркене çеç илсе кăтартам:

Ту айне пытаннӑ ялӑм пур.
Шӑнкӑр-шӑнкӑр ун ҫырми — йӑмралӑх.
Тӑршшӗпех иленнӗ ушкӑн хур...
Сарлака урам. Рет-ретӗн пӳрт.
Хутлӑх пур хуткупӑс янрамалӑх!

Чимӗр-ха, ку сӑвӑра Тутарстанри Тӑмпарлӑ ялӗн ӳкерчӗкӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм чӑваш ялӗн сӑн-сӑпачӗ! Сӑвӑ пахалӑхӗ шӑп ҫакӑнта. Эстрада концерчӗсенче ҫатӑркка сӑвӑсем каличчен, чӑн малтан эпӗ ҫак сӑвва калама сӗнӗттӗм!

Юратнӑ поэт кӗнекинчен тепӗр икӗ тӗслӗх илмесӗр тӳсейместӗп. Сӑмах килти пукан ҫинчен ҫеҫ пырать.

Сан ҫине ларатчӗ танлӑн
Кукаҫи е кукамай.
Ҫепӗҫ юрӑ эс тӑнланӑ,
Сиккеленӗ ташӑ май.

Халӗ пукан ҫинчен маннӑ, ӑна тӗксӗм ҫенӗке лартнӑ.

Тайӑлатӑн лӗнчӗр-ленчӗр,
Ташласан хӑна пӳртре.
Эс камне-мӗнне пӗлмесӗр
Сан ҫинче ларать витре...

Куртӑр-и, кунта сӑмах пӗр «сар пукан» ҫинчен мар, атте-аннесен ырӑ йӑли-йӗркине, пурнӑҫра кирлине пӗтӗмпех упрас-сыхлас, малалла илсе каяс пирки пырать.

Алексей Афанасьев сӑн урлӑ шухӑшлать тесе маларах эп каланӑччӗ ӗнтӗ, ҫакӑ вӑл унӑн пӗтӗм пултарулӑхӗн тӗп никӗсӗ, шӑнӑрӗ. Юлашкинчен эпӗ тӑватӑ йӗркеллӗ «Туйсем» сӑвва ҫеҫ илсе кӑтартам:

Сӗм вӑрманӑм! Ташлама пӗл
Ватӑлӑх туйӗсенче:
Кӗмӗл туй сан — шартлама хӗл,
Ылтӑн туй — кӗрхи тӗнче!

Ҫапла калама чӑн поэт ҫеҫ пултарать.

Оригиналлӑ, хӑй еверлӗ поэта пирӗн хӑшпӗр критик-

сем пĕр-пĕр пысăкки çумне çыпăçтарма тăрăшаççĕ, унран вĕренсе, ÿссе, ун традицине малалла илсе пырать, теççĕ. Кунта чăнни кăштах пур ĕнтĕ, анчах та, пĕтĕмпе илсен, поэта пысăкки мар, пурнăç вĕрентсе, ÿстерсе пырать. Ку — аксиома.

Алексей Афанасьевăн хăйĕн сăнĕ, сасси пур, унăн «тура пани» çиççе, выляса тăрать, çавăнпа та вăл поэзин аслă çулĕпе шанчăклăн, хăюллăн, хăйĕн ĕçри тăванĕсене савăнтарса утать.

Поэт ку кĕнекене поэмăсем те кĕртнĕ, терĕмĕр. Эп вĕсем çинче чарăнса тăрасшăн мар. Пысăк формăна — пысăкрах калаçу кирлĕ. Анчах маншăн çака паллă: пурнăç поэт поэмисенче те тапса, вĕресе тăрать. Эпир вĕсенче нефтяниксене, колхоз ваттисене, çамрăк-кĕрĕме, вăрçăн хăрушă питне аван куратпăр. Тен, поэт вырăн-вырăн ытлашширех те калаçать пулĕ, ăна сăввисенчи кĕскелĕх, сăнарлăх çитсех каймасть пулĕ, пурпĕрех вулама тытăннă поэмăна вĕçне çитмесĕр аларан пăрахмастăн.

Вулакансем, миçе-пĕр каласан та, умсăмаха, типĕ çыраççĕ тесе, пăхсах каймаççĕ. Алексей Афанасьев поэта юратакансем вулĕç тесе шанатăп. Вĕсем талантлă йыш хушшинчи тепĕр сăвăçа ытларах ăнланĕç, хытăрах юратĕç.

**СТИХВАН ШАВЛИ,**
чăваш халăх поэчĕ.

*Тăван Çĕршывăма,*
*Юратнă çĕрĕме*
*Паратăп сассăма,*
*Паратăп чĕреме!*

## ÇУРАЛНĂ ÇĔРШЫВРА

I

Вăйлă, теççĕ вăйлисем пире —
Пирĕн вăй, чăнах та, иксĕлми!
Вăйсăр çын, пиçен шăтман çĕре
Сад лартса, ӳстермĕ панулми...

Вăйсăр çын, шывсен пырне касса,
Тинĕссем тăваймĕччĕ, куран.
Вăйсăр чух вăлах, халран кайса,
Ҫиммине те сĕтĕрнĕ аран.

Вăйлă çын машина чĕлхипе
Ту-вăрмансене калаçтарать.
Пăралук халь пирĕн тилхепе —
Аслати вутне вăл чуптарать.

Вăйсăр çын тĕнче тĕлĕнмелле
Вĕçейсе килеймĕ Ҫĕр тавра,
Ҫитереймĕ Уйăх çинелле
Хамăрăн çунатлă çăлтăра.

Вăйлă, теççĕ тĕнчере пире —
Ахальтен тухман çак чăн сăмах:
Парти вăйĕ пирĕн чĕрере,
Пирĕн вăй — Тăван çĕршывăнах!

Аслă, теççĕ пирĕн халăха.
Аслине пĕлсе калать этем.

Çĕрĕ-шывĕ аслă мар-и-ха?
Аслă мар-и сăрчĕ-тăвĕсем?..

Çитмĕл çичĕ тинĕс таппинче
Пирĕн туслă халăхсем хуçа.
Çăлтăрсен çулне виçе-виçе
Çын халь космос чаршавне уçать.

Ĕçĕ пысăк аслă халăхăн,
Аслă мар-и ун ĕмĕчĕсем?
Сӳнччĕр, пĕтчĕр тапăк-татăкăн
Çĕр çинче пушар вучахĕсем!

Аслă халăх аслă Çĕр çине
Пĕр куна килмен —
ĕмĕрлĕхе!
Çунтарма туман вăл ялсене —
Юрласа-пĕр пурăнмашкăн-çке!

Аслă, теççĕ, пирĕн халăха
Аслă çĕршывра çуралнăран,
Савнăран ĕçпе тăнăçлăха,
Партипе пĕр шухăш тытнăран.

Юратаççĕ пирĕн халăха,
Юратаççĕ тивĕçне кура.
Ма пытармалла маттурлăха,
Пурте мухтасассăн хамăра?

Пур-и пирĕн хĕвелтен ăшши?
Пур-и пирĕн сивĕ çил пекки?
Чаплă мар-и çумăрсен ташши?
Сăрлă мар-и сарамат пĕкки?..

Юратаççĕ пирĕн халăха,
Шăратаççĕ хамăрăн юрра.

Чăн, эпир пулман çав начаркка
Хамăрах çуралнă çĕршывра!

Вăйлă, теççĕ вăйлисем пире,
Аслă, теççĕ, аслине кура.
Парти вăйĕ — пирĕн чĕрере,
Ленин сăнĕ — яланах умра.

## II

Çĕршыв тени — çĕрпе шыв çеç-им?
Пуриншĕн те çĕршыв — анне.
Сухаçă, Тимĕрçĕ, Кĕслеçĕ
Анне çуратнă тĕнчепе.

Ачисене савса пăхмашкăн
Вăл чĕннĕ сарă Хĕвеле.
«Ачасене сиктер, ан ашкăн»,—
Тесе ăс панă лĕп çиле...

Сухаçă, Тимĕрçĕ, Кĕслеçĕ —
Ӳсет виç паттăр, виç тăван.
Аслатисем çӳлте кĕрлеççĕ,
Шăнтма пăхать хаяр тăман...

Ачисене юратнă амăш
Парать вăйне, чун ăшшине.
«Ӳссе çитсен, хама та манмĕç»,—
Ялан çапла юрлать анне...

Тăван Çĕршывăм — ыр аннеçĕм,
Çемйӳ сан пысăк та ĕçчен.
Çĕн юрăсем хывать Кĕслеçĕ
Тăнăçлăхпа Телей çинчен.

Тимĕрçĕпе Сухаçă мулĕ
Çурлапала мăлатукра.

Этем ялан телейлĕ пулĕ
Пире çуратнă Çĕршывра!

III

Тавтапуç сана, Тăван çĕршывăм,
Эсĕ ырă, вăйлă та таса...
Çакăнта çуралтăм, юрă хыврăм,
Пурнăça хĕрÿллĕн юратса!

Хум çапать кунта тăван уй-хирĕм,
Çумăрĕ иртет çăва-çăва.
Ян каять куккук сасси каç-ирĕн,
Чашлатать уçланкăра çава...

Эс хитре те чаплă, ман Çĕршывăм!
Вăрмансем хĕлхемлĕ, кĕр çитсен...
Шур хĕл кунĕ паслă, чăрсăр сивĕ,
Хĕл тумтирĕ — кĕмĕл те мерчен...

Тавтапуç асран кайми сăнсемшĕн,
Хуть мĕнле тумпа та эс маттур.
Эп сана, савса, анне теем-ши —
Ман сăнра-çке сан сăну та пур.

Тавтапуç сана, Тăван çĕршывăм,
Сан арку çинче-çке йăпанса,
Выляса-кулса ÿсет хĕр-ывăл
Ху пек ырă, вăйлă та таса!

## ТĂВАН ТАВРАЛĂХРА

Çулталăкне пĕрре
Пĕкĕлмене çула тухас пулсан,
Пĕр хывăнмасăр выртнă-çке каçран.

Аннеçĕм ир-ирех
Вăратмалла пире,
Ял варрипе кĕтӳ иртсе кайсан.

Эпир ачаччĕ-ха,
Çула тухни танлашнă уявпа.
Шуçчуман мар — хуп сарнă урапа,
Пире лăка-лăка,
Чупатчĕ аякка
Юмах пек вăрăм çĕр çулхи çулпа...

Палланă вырăнсем!..
Арçын пулса килетĕп çакăнта:
Асамлă улăп çутнă пек çурта —
Çунаççĕ факелсем...
Нефть вышкисем
Сăрт хĕрринче лараççĕ хуралта.

Шыра, хуть ан шыра —
Çул курăкĕ хупланă кив çула.
Çын çӳремен кĕпер енне хăмла
Ӳсет хăвалăхран.
Йăлтăртататъ умра
Асфальт-шоссе, ялтан — хуланалла.

Пĕр-пĕринчен иртсе,
Машинăсем чупаççĕ вĕçĕмрен:
Пĕкĕлмене кай, ирт Пĕкĕлмерен!
Кучченеçсем илсе,
Яла çитен вĕçсе,
Çумкка мучи пĕр чĕлĕм туртиччен.

Тăван çĕршывăма
Паллас çĕртен паллаймăн ку чухне.
Ыталăттăм тăван çĕр-аннене —
Май çук ыталама.

Шалти ыр туйăма,
Шăрçа туса, тирем-шим хут çине?

* * *

Çӳллĕ Бавлă тăвĕсем пуклак —
Ќивĕ тӳпеттей пек аякран.
Инçетре, тĕтре пек, кăн-кăвак
Тăсăлать ту тăрăх ват вăрман.

Ќуçĕсем пулсассăн ту-сăртсен,
Вăрмансем илтме пултарайсан,
Ыр хăна пек, кăмăл туличчен
Вĕсемпе калаçăттăм паян.

Вышкăсем çĕкленнĕ май кунта
Сăввăма шăратрăм эпĕ те...
Эп нефтяник мар та, тупата,
Нефть шăрши манран та çапатех!

## ЮРАТАТĂП!

### 1.

Юратнă вăрманăм — ачалăх сăпки,
Çук маншăн санран илемли, лайăххи.
Ќунта вăранать вăшăл çилĕн ыйхи,
Ќаç-каç пытанать çут хĕвелĕн çăмхи.

Вăрманăм, вăрманăм, саватăп сана!
Нихçан питĕрмен эс чипер алăкна.
Миçе пытансан та çурхи сулхăнна,
Чĕреçĕм çуталнă, эп пулнă хăна!

Тен, эп йăлăхтарнă куллен çӳресе?
Нумай, тен, тултарнă çырла чĕресе?



Чувашская республиканская
библиотека
им М. Горького
м-20092-493

Пĕлместĕп, вăрман, эс савнах-ши мана,
Шур хурăн шывне ĕçекен ачана?..

2.

Юратнă уй-хирĕм! Çилхеллĕ çилпе
Мĕскер калаçатăн ачаш чĕлхӳпе?
Çунатлă çиле кӳлеесчĕ тĕпе,
Алла тытаясчĕ ука тилхепе!

Ман пĕккĕм пулин асамат кĕперри,
Шăнкрав вырăнне шăнкăртаттăр тăри!
Юратнă уй-хирĕн асамлă юрри
Кунçул сӳниччен асăма юлтăр-и!

Юратнă уй-хирĕм, саватăп сана,
Хумсем чӳхекен ылтăн-кĕмĕл тумна!
Пĕлесчĕ, мĕскершĕн ялан ху патна
Савни пек чĕнсе илĕртетĕн чуна?

3.

Юратнă тусем! Аякран-аякран
Йĕнер пек сăнарăр куçа курăнсан,
Вĕçсе ман иртессĕм килет кайăкран —
Унта савнă ялăм, мĕнпур ыр тăван...

Ту çийĕ сап-сарă — те сырнă сурпан,
Ват çын çӳçĕ пек сапаланнă кăлкан...
Мĕн пур-ши ватти таврара çак туран? —
Пуçне çĕре хунă, çыврать арăслан.

Çыврать аслă ту. Хаш! сывлать хушăран.
Вутпа, тинĕспе вăл кĕрешнĕ тахçан.
Сĕвек çамкинче çавăнпа çĕр суран,
Суран çĕввине кăвакартнă кăлкан.

4.

Тӳпе тӗлӗнтернӗ пире пӗчӗкрен.
Вăл кӗмӗл пек çутă, сенкер вăл, кӗрен...
Хирти чечексем те, çурхи кун çитсен,
Чипер сăн туяннă каçхи тӳперен.

Мăнаçлă тӳпе! Сан нумай пӗлӗтӳ,
Таçта шăвăнать кӗтӳ хыççăн кӗтӳ —
Никам та санран пуянрах пулайман,
Никам та санран нумайрах пурăнман.

Ҫаçпа тумланатăн ахах та селем —
Ирччен чӗнтӗрлеççӗ сана çăлтăрсем.
Асамлă тӳпеçӗм! Эп пурăннăçем
Ҫуратăп санра çӗнӗрен çӗн илем!

5.

Ҫурмасăр ирттерӗттӗм çамрăклăха,
Тӳпе çутмасассăн каçхи уйăха.
Ах, уйăхлă каçăм! Сирсем ыйăха,
Санран пытармастăп калас сăмаха:

Ват çын çывраймасть юрату иртнипе,
Яш çын çывраймасть юрату çитнипе...
Эс, уйăхлă каçăм, касси-кассипе
Тӳпе питне акнă пин çăлтăр-кӗрпе...

Мӗн акнă, çав шăттăр! Ҫаллех çăлтăртан
Ҫаш-каш шăтса тухтăр çут çăлтăр ыран!
Ҫурла вырăнне вырма уйăх тухсан,
Эп калăп: илемлӗ-çке пурнăç, пуян!

6.

Вăрман пек янрать эс таçта юрлани.
Чулту пек эс чăтăмлă, тусăм, савни!

Тӳпе — ĕмĕтӳ, каҫ пек вăрттăн куҫу,
Уй-хир кĕвви евĕр ачаш калаҫу...

Эпир вăрманах-ҫке, эпир те уй-хир,
Эпир те ҫил евĕр, эпир те чулту...
Хитре вĕсенчен те пĕрле чух эпир —
Хăватлă чун панă пире юрату!

## НЕФТЬ

Макар мучи ĕҫленине
Паянхи пек эп астăватăп.
Нумай вăл авнă пилĕкне,
Кĕреш-юман пек ҫирĕп вată.

Сухалĕ унăн тĕтĕм пек
Кăтраччĕ, вăрăмччĕ, кăвакчĕ.
Уҫланкăра каҫпа-ирпе
Вăраххăн тĕтĕм яванатчĕ.

Чечеклĕ симĕс ҫереме
Сăнсăрласа, ҫунатчĕ хурăн,—
Урапасем сĕркелеме
Кăшт тикĕчĕ тумлатчĕ унăн.

Ҫав тикĕтпе мĕн-мĕн туман?
Уяв ҫитсен, пушмак сăрлатчĕҫ,
Ӳте ҫăпан-суран тухсан,
Вĕрсе-сурса сĕрсе яратчĕҫ.

Масар ҫинчен Макар мучи
Тăрса пăхас пулсассăн халĕ,
Вăл курĕччĕ: вăрман ҫинчи
Вут ҫутипе ҫиҫет ун ялĕ.

Çынсем халь çĕр кăвапине
Шăтарнине ун пĕлеесчĕ...
Хăй шанмĕççĕ хăй курнине:
Епле çӳле тапать-çке нефчĕ!

Ку — иккĕмĕш Баку. Курр эс:
Ăна çĕн пилĕкçуллăх тунă.
Пĕр талăкра пĕр вышка çеç
Парать халь нефть çичшер çĕр
тонна!

Куллен ӳсет çак нефтьпалан
Машинăсен хăватлă шавĕ.
Ку пилĕкçуллăх — аслă план —
Хастарлă халăхăн мухтавĕ!

## ПĔЛĔТСЕМ

Çӳл ту çине эп улăхмассерен
Инçетелле пăхмашкăн юрататăп.
Йĕри-тавра — тӳпе.
Пит инçетрен
Шур пĕлĕтсем иртеççĕ татăк-татăк...

Салам сире, ĕшеннĕ пĕлĕтсем!
Ту хӳттине çитсе, пăртакçă канăр.
Ик куç тулли ытарайми илем —
Тăван çĕршыв çапла тумланнă капăр.

Тӳпенелле кармашнă вышкăсем
Кунта мăнаçлăн ларнă ретĕн.
Çак çĕршыва пĕрремĕш хут килсен,
Пуян çĕршыв, Баку çĕршывĕ, тетĕн.
Çук, Баку мар.

Вăл унăн шăллĕ çех.
Ун умĕнче тулли телей, пуласлăх.
Хастарлăскер, кĕске вăхăтсенчех
Вăл Бакуран та иртĕ, пулĕ аслă.

Васкавлă пĕлĕт! Қавказа çитсен,
Баку патне пырса, тен, курăн:
Урал тăвĕсенчен — тăвансенчен —
Вара ăна саламлăн, ырлăх сунăн!

## ТАРҚĂН ÇĂЛĔ

Ту-чакăллă çĕршыв пирте,
Йĕри-тавра хура вăрман.
Пĕр сĕм варта çăлкуç пур, тет,
Юнашарах — лаштра юман.

Тахçан-авал çав вырăнта
Пытаннă, тетчĕç, таркăнсем.
Пуянсене çаратнă та
Пуçтарнă мул çĕклем-çĕклем...

Çав таркăн çăлĕ тавраш не
Çынсем ухтарнă кăлăхах.
Вĕçтернĕ ылтăн çулçине
Унта кĕрхи вăрман анчах.

Сĕм-авалхи путвалсенче —
Шăмăпала кĕл юлашки.
Лаштра юманăн айĕнче
Мăкланнă кив çăл валашки...

Типмен çăлкуçĕ вăрманта...
Пĕррехинче Назар пичче

Çăла ĕçмешкĕн пынă та —
Ишет, тет, тикĕт шыв çинче!

Тикĕтлекен урапапа
Кунта кĕмен-çке ыр этем?..
Тахçан çӳренĕ пуль упа,
Йăва шыранă кашкăрсем...

Мĕн, тикĕчĕ ку шыв çинче
Пĕтме пĕлмест çулран-çулах?..
Темле çынсем пĕррехинче
Килсе тĕпчеççĕ çак çăла.

Хурах пуçтарнă ылтăн мар
Кунта пытаннă ĕлĕкрен —
Сан ывăлу паян, Назар,
Нефть кăларать çĕр айĕнчен.

Аваллăх тĕлĕкне путса,
Мотор шавне итлет вăрман.
Юхать çăлкуçĕ тап-таса,
Выртсах ĕçетпĕр валакран.

## ТУТАРСТАН ÇУЛĔСЕМ

Ем-ешĕлех çулла
Тухатăп та çула —
Ту çинелле çитес килет малтан.
Сăртсем çинче кăлкан,
Сĕм варсенче вăрман...
Юрлать чĕрем: «Ку — пирĕн Тутарстан!»

Ту айĕнче валак —
Сив çăлĕсем шарлак,
Сукмаксене якатнă пуль пушмак...

Ыр çыннăн килĕнче
Хăна пек килексе
Чей ĕçнĕ чух сăмахĕсем пылак.

Пин кайăк, пин йăва,
Янрать варта çава,
Шуралесем çинчен юмах ярать вăрман.
Шур хурăн катаран
Аркипеле сулсан,
Кашлать уй-хир: «Ку—пирĕн Тутарстан!»

Сенкер тӳпемĕр пур,
Пĕлĕчĕсем шап-шур,
Картан-картан килет пек кайăк хур...
Сăртсем çинче, çӳлте,
Лексе шур пĕлĕте,
Лараççĕ хурçă вышкăсем маттур.

Шух юрă-ташăсен
Çилне туяс тесен,
Таçта кайса, тăванăм, ан чăрман:
Ташлать вут тивмелле,
Юрлать ĕçле-ĕçле
Сан ăрăву, юратнă Тутарстан!

Мăн Атăл урлă çул —
Çут уйăх çулĕ пуль...
Çулсем! Çулсем! Каяр-ха хăшинпе?
Шур хуласем нумай:
Алапука, Чистай,
Пĕкĕлмепе Элмет те Актӳпе...

Çулсем! Çулсем! Эсир
Кĕрлетĕр каç та ир,
Кустăрмаран вĕçсе юлмасть тусан.
Туссем патне тусла,

Ыр ятлӑ ҫулпала
Нефть ӑсатать юратнӑ Тутарстан!

Атӑлпала ишер —
Хусанӑмӑр чипер,
Кӗрлет урамӗ, калаҫса-кулса
Ҫӗн юрӑ-кӗвӗре,
Ҫунатланать чӗре,
Дускай* туртса ярсассӑн купӑса!

Умри ҫатма-ҫула
Тӑсас килет мала,
Тӑсас килет ӑна хӗвел таран!
Юрла, юрла, Сарман,
Тулса юх, Ҫарӑмсан,
Сабантуйри пек савӑн, Тутарстан!

---

* Дускай — тусӑм (тутарла).

## КАЛАҪУ

Нефть насусӗ, тур лаша пек,
Пуҫ ухать ӗҫле-ӗҫле.
Тен, ӑна аҫа та ҫапӗ,
Юр та пусӗ-ха хӗлле...

Шурӑ ҫӳҫлӗ ват нефтяник
Пычӗ, ларчӗ ун умне.
Ҫакӑнта тахҫан пуҫланӑ
Хӑй ӗҫне, ӗҫ юррине...

Аслӑ ҫынпала калаҫнӑн,
Ачашлать вӑл насуса:
— Эс ӗҫлен-ха, ват лашаҫӑм,
Ҫӗрӗн-кунӗн пуҫ ухса...

Аставатăп: пĕр насуссăр
Нефть тапатчĕ çӳлелле,
Газ çунатчĕ нимĕн уссăр,
Çутатса хире çĕрле.

Вăйĕ чакрĕ нефть тымарĕн,
(Ĕмĕрсем çапла-çке, тус,—
Çамрăклăх пĕрре çеç мар-и!)
Ҫирлĕ пултăн эс, насус!

Эп те акă, ват лаша пек,
Пускалатăп урана.
Пурнăç шавĕ, пурнăç чапĕ
Пуç усма памасть мана.

## ТУСЛĂХ ҪӲЛЛИ

Ачăллă* вăл чăвашла,
Пушкăртла ун ячĕ
«Аслă Ҫӳлĕ» пулмалла —
Çапларах янратчĕ...

Ҫӳлĕ пултăр кӳлĕ пек,
Ятĕнче-им чысĕ?
Хатĕрленчĕ кунĕпе
Ыр хуçа килйышĕ.

Хатĕрленчĕ Ачăллă,
Туй çывхарнă евĕр:
Шăрттанне те хумалла,
Чăкăтне — темтепĕр...

Илмелле хуткупăса —
Унсăр мĕн илемĕ?

* Ачăллă — Пушкăртри кӳлĕ ячĕ.

Уяври пек янраса
Юхтăр юрă-çемĕ!

Тухрăмăр хайхи çула —
Çулĕ пит кĕске-и?
Çилпеле выля-выля,
Варкăшать кĕпе-йĕм.

Акă Ачăллă умра!
Кăн-кăвак, сип-симĕс...
Пăнчă евĕр, аякра
Ярăнать пĕр кимĕ.

Шывĕ тăрă — кĕленче!
Савăнăç пек çутă:
Чăм, шыва кĕр киленсе
Çулнă хыççăн утă.

Сарă хăйăрлă çыран
Кăнтăрти пек лайăх.
Ачăлла таçтан-таçтан
Килнĕ тĕрлĕ халăх:

Пур кунта грузовиксем,
Лашасем те кӳлнĕ...
Халăха пиллет илем
Аслă, çутă кӳлĕ!

Килнĕ каннă вăхăтра
Ферма хĕрупраçĕ.
Вутăш пек вĕсем шывра:
Тăнă... çӳç тураççĕ.

Сарана пек сап-сарах
Пушкăрт сăмаварĕ

Шăпăр евĕр нăйлатсах
Юрлама пуçларĕ.

Улттăн ларнă ун тавра.
Ултă ватă пĕлĕш,
Мухтаса сăмавара,
Хыпкалаççĕ белĕш*.

Тутарсем те марисем,
Чăвашсем чылаййăн...
Ачăлла, пĕрре килсен,
Эс хăçан манайăн?

Çирĕп туслăхăн кӳлли
Пулчĕ Аслă Кӳлĕ.
Туслăхран мĕн пур хакли?—
Урăх çук та пулĕ!

Ачăллă пек сарлака,
Ачăллă пек аслă
Пултăрччĕ йăхран йăха
Туслăх, хурăнташлăх!

---

* Кукăль (тут.)

## ЧĂВАШ АЧИНЕ

**Пĕчĕк Çируша**

Чăваш ачи çуралчĕ тин кăна —
Пĕрремĕш кайăкĕ яш мăшăрсен.
Эп мĕн калам-ши пиллесе ăна?
Чăваш пек пултăр ыра та ĕçчен.

Карелире ӳссессĕн те, ан тив,
Аслашшĕсен çĕрне ан пултăр ют.

Мăнаçлă çавă хамăрăн Çĕршыв,
Ăçта кайсан та, пур хĕвел, кил-çурт...

Çуралнă çĕр темрен те хаклăрах:
Чукча сивве савать, узбек — ăшша...
Илемлĕ Çурçĕр кил пек пултăрах
Карелире çуралнă чăваша!

## ПИРĔН ЯЛ

Ту айне пытаннă ялăм пур.
Шăнкăр-шăнкăр ун çырми — йăмралăх.
Тăршшĕпех иленнĕ ушкăн хур...
Сарлака урам. Рет-ретĕн пӳрт.
Хутлăх пур хуткупăс янрамалăх!

Уйăха шухăшласа канма
Сĕм вăрманлă тăвĕсем ун çӳллĕ.
Е чупса ансассăн айлăма,
Эс чăматăн уй-хирти хума —
Çил тухсан, карап путмалăх пулĕ!

Кашниех ялта — уй-хир ăсти,
Килĕрен кĕрекисем пит тулăх:
Çырлине çи, сăрине астив,
Ташласа кур тăрăст-тăрăсти —
Туй пулсассăн, асăнмалăх пулĕ!

Ыр атте-анне çуратнăран
Хĕр-каччи ытараяс çук хӳхĕм.
Сар хĕвел анать аран-аран —
Каясси килмест тăван ялтан:
Ĕмĕр юратсассăн, уйрăлу хĕн...

Уйрăлмăп санран, çуралнă ял!
Сан патна таçтан та эпĕ килĕп.

Ҫӑкӑра лексессӗн те сухал,
Санпала чух иксӗлмӗ вӑй-хал —
Аттепе аннен юнри пехилӗ!

## ТӖНЧЕ ХИТРЕ

Мӗнешкел тӗнче хитре!
Ирӗклӗ тавралӑх вӗҫсӗр...
Шӗвӗ сӗт пек тӳпере
Тӑрӑлсан ирхи тӗтре,
Ҫайӑксем юрлаччӑр, вӗҫчӗр!

Шур кӑмпаллӑ вӑрманта
Шурӑ хурӑнсем шавлаччӑр.
Выртмалла килсен утта,
Ырӑ вырӑн пур унта —
Мамӑк курӑк, симӗс чатӑр...

Мӗнешкел тӗнче хитре!
Ӑшӑнса ҫыврать, ав, ту-сӑрт.
Сӑпкари пек, уй-хире
Ҫил ачашшӑн сиктерет,—
Ҫусӑрах, хумсемӗр, кусӑр!

Хамӑр ял ҫине пӑхсан,
Савӑнса тапать чӗреҫӗм.
Ман тӗнчеҫӗм чи малтан
Пуҫланать тӑван ялтан —
Ҫавӑнпа тӗнче хитре-шим?

## АЧАЛӐХ

Ӑҫта ман ачалӑх? Ҫалас-и?
Вӑл сывӑ, вӑл канӑҫсӑр, шух —
Ем-ешӗл Тӑмпарлӑ урамӗ
Ача-пӑчапа тулнӑ чух...

Мĕнле ман ачалăх? Çап-çăмăл
Чупать вăл каçчен çуркунне.
Шывра вăл çӳрет чăмпăл-чăмпăл
Шип-шип тухиччен урине.

Выртма лашине, ав, кăкарчĕ...
Çиет вăл серте те çăмах...
Шырать курпун уйăх — ват карчăк —
Ăна юптармашкăн юмах.

Ачалăх!.. Ним мар ăна çумăр,
Ним мар çул тусанĕ çулла.
Пит-куçĕ улма пек чăп-чăмăр,
Вăй-халĕ туртать тулалла.

Ачалăх — телейлĕ саркайăк,
Чĕркĕмĕл пек йăрă та шух!
Ачалăх пур чух ватăлаймăп,
Тăмпарлă урамĕ пур чух!

Ăçта ман ачалăх? Қалас-и?
Вăл сывă, кашни утăмра.
Ачан ачисен те малашĕ
Қулать те вылять умăмра!

## ПĔР ЁМĔРТЕ...

Пĕр ёмĕрте ăçта кăна ан пурăн,
Ăçта, ура пусса, йĕр ан хăвар —
Салтать-и çивĕтне сăртри шур хурăн,
Шыв кăтрине тытасшăн-и хăва —

Çук, манăçмасть, асран тухмасть
çав вырăн,
Пĕрре курни каймасть куç умĕнчен.

Ăна кайран аса илмешкĕн ырă,
Таçти-таçти çĕн çĕрсене çитсен.

Тепре кăна савса-курса тухасчĕ
Паллана ялсене — тата тепре!
Çынна кунçул çитмест.
Кунсем васкаççĕ
Эпир утса çитеес çук çĕре.

## ТĂВАНСЕМ

Хум чупать те хум çапать
Ĕмĕрхи катмар чула.
Сирпĕнсе пĕтсе, чакать
Вăй пухмашкăн каялла.

Тинĕс шавĕ ирхине
Салатать тĕлĕксене.
Қаçранах минтер айне
Хупăттăм эп хумсене.

Çывăрма куçа хупсан,
Тинĕс хашлатать çаплах,
Қассăн-кассăн çил-тăман
Урамра алхаснăнах.

Çăварни эрнисенчи
Çил-тăман аса килсен,
Эпĕ — çурçĕрен каччи —
Савăнатăп чĕререн.

Тинĕс пултăр кăнтăрта,
Пирĕн пултăр çил-тăман.
Аякра пулсассăн та,
Иккĕшĕ те — пĕртăван!

## МӖНЕХ-ШИ ВӐЛ ТЕЛЕЙ ТЕНИ?

Телей, телей тесе калатӑр,
Мӗнех-ши вӑл телей тени?
Этем сасси ак ан янратӑр,
Ан илтӗнтӗр вӑл калаҫни —

Телейсӗр пулӗ чӗмсӗр халӑх
Ҫут тӗнчере ӗмӗрлӗхе.
Чӗлхесӗр эп таҫта ҫухалӑп —
Сыв пултӑрах тӑван чӗлхе!

Ӗҫпе хӗрмен ҫын пулӗ халсӑр,
Телейӗ — ыйхӑ ун, тӳшек...
Этем тыр актӑр та чул кастӑр —
Телей ӗҫрен шӑтса ӳсет.

Ӗҫчен чӗре шӑратӗ юрӑ,
Ӗҫчен этем юрри хитре.
Юрламасан, телейсӗр ҫӳрӗ
Этем ҫак ҫутӑ тӗнчере.

...Ҫӗн уйӑх ту ҫине хӑпарчӗ,
Ялта яш-кӗрӗм шавлӑ, шух...
Телейлӗ эсӗ, ҫамрӑк каччӑ,
Ши! шӑхӑрса ташланӑ чух.

Пӗрле кунҫул виҫсе тухмашкӑн
Ҫумра пулсассӑн чун савни,
Ан хуйхӑр ик ӗмӗр паманшӑн:
Телей вӑл — пӗр ӗмӗр тени.

## ИНҪЕТ

Аякра, ҫӗрпе пӗлӗт пӗрлешнӗ ҫӗрте,
Палӑри-палӑрми курӑнаҫҫӗ тусем.

Ҫăвакарнă вăрман тăсăлать инҫете,
Тĕтрепе карăнать кайнăҫем...

Тĕтрепе карăнать-ҫке юратнă инҫет!
Чунăма астарса, хăй патнех вăл чĕнет!
Аякри ҫулсемпе ман чупасчĕ тепре,
Курăнмаҫҫĕ вĕсем — инҫетре...

Иртсе кайнă ачалăх сăвви-юмаххи
Сĕм вăрман витĕр ҫеҫ илтĕнмест-и пире?
Ҫул иртсен те, ан тивтĕрччĕ ватлăх мĕлки
Ҫамрăкла эп чуптунă хĕре...

## ҪУРХИ ҪАҪСЕМ

Яланах хама эп ҫамрăк тенĕ,
Шухăшсăр ăсатнă кунсене....
Ҫулсерен ҫакаҫҫĕ кĕмĕл тенкĕ
Йăмрасем хаваслă ҫуркунне.

Ҫулсерен ҫурхи ҫаҫсем илемлĕ,
Хапхаран кĕреймĕн ытарса.
Тĕнкĕлти тăмра сасне итлем-ши?
Пĕр тăсса ярам-ши купăса?

Хĕрсене тек илĕртмĕ ман купăс,
Ҫĕввĕме палламĕ ҫурхи ҫаҫ...
Йăмрасем кăна, тен, ҫулҫă ҫупĕҫ
Сан енче, юратнă Турикас!

Пур унта ман савнă, тунсăх вырăн,
Ман йĕрсем юлнах тăкăрлăка...
Ҫулсерен унта курма эп пырăп,
Таптама именĕп курăка.

Пурпĕрех хама эп çамрăк тейĕп,
Савăп çулсерен çурхи каçа...
Хам çумрах пулсассăн та телейĕм,
Ун пуçламăш юлнă-çке хыçа.

## ЭС АЙĂПСĂР МАН ЧĔРЕРЕ

Эп вунă çул сана курман.
Хушăмăрта—уй-хир, вăрман...
Курас килсен, кайма çул пур.
Те хам пыман, те эс чĕнмен...
Эпир санпа тĕл пуличчен,
Тен, çĕр хут çăвĕ çумăр, юр...

Ик юплĕ пулчĕ пирĕн çул.
Сăмах кĕскеччĕ: «Сывă пул...»
Эп туйрăм, эс те ан пытар:
Иксĕмĕре те юрату
Сыхлатчĕ вăрттăн — эс асту,
Вăл çывăхрахчĕ — юнашар.

Анчах та вăл çухалчĕ час.
Кама-ха уншăн айăплас?
Эс ман умра ялан таса.
Аса илетĕп хăш чухне
Ытарайми туту сăнне —
Вăл çаплипех хитре-ши сан?

Ăçта кайсан та, пул хитре.
Эс айăпсăр ман чĕрере.
Манра çеç айăп пур пулас.
Чĕреçĕм — кайăксăр йăва —
Сӳнсе çитмен юратăва
Çаплах усрать — ман мĕн тăвас?..

## ÇАМРĂК ЧУХ

Ман умра савнийĕн кив портречĕ:
Хурăнлăх... пин-пин чечек... ĕшне...
Çамрăк чух, чăнах та, вăл хитреччĕ,
Пурте урăхлаччĕ ун чухне.

Кайăксем те урăхла юрлатчĕç,
Чечексен шăрши те тутлăрах —
Савнипе пĕрле ларса çырла çи,
Чечексем татса шыва пăрах...

Урăхла пăхатчĕ кĕмĕл уйăх,
Çамрăксем вăййа тухсан çулла.
Сăмахсем те, тусăм, пулнă урăх,
Чĕресем те тапнă çамрăкла.

Иртнисем ыр тĕлĕке кĕреççĕ —
Вăранса, лăпкап ачасене.
Çамрăк чух эпир çапла хитреччĕ,
Пурте урăхлаччĕ ун чухне.

## ХУТКУПĂС

Йăмра мĕлки айне ял пытансан,
Касхи тÿпе çути сÿнсен йăвашшăн,
Чĕре патне тытса туртса ямашкăн
Йĕс чĕлĕхлĕ хуткупăс пурччĕ ман.

Турикасра туртсан, анаткаса
Саркайăк пек вĕçетчĕ кĕмĕл кĕвĕ.
Савни килетчĕ уйăх пек кулса,
Пĕр аванса илетчĕ хăмăш пĕвĕ...

Яш ĕмĕре ăсатрăм, туй туса,—
Хунавлă пултăр хурăнташ таврашĕ!

Çамрăксене тыттартăм купăса —
Пĕлместĕп: халь ăçта-ши вăл, камра-ши?

Ҫама кĕтсе юрлать-ши каçсерен?
Ҫама шырать-ши макăрса, мăнтарăн?
Ҫĕвви нихçан çухалмĕ чĕререн,
Аса килсе, ялан мана çунтарĕ.

## МĂН ҪĔРӲ

Çимĕкре-мĕн туйăр сирĕн,
Сирĕн туйăр çĕнĕлле.
Ял-ял урлă, ту-сăрт çийĕн
Ҫĕрлесе туй килмелле.

Ырă кăмăлĕ чăвашăн,
Пур енне вĕçет йыхрав.
Ваттисем мана йăлашăн
Мăн кĕрӳ тăвасшăн, ав...

Мăн кĕрӳ пулса курманччĕ,
Вăл кирлех-ши-ха паян?
Хăтăшне вăл мухтаканччĕ,
Çук çыннах туса пуян...

Çуккисем ялта халь çуккă!
Тулăх пурнăç — килĕрен.
Мухтамашкăн чаплăн, шуххăн
Туй такмакĕ юхтăр, тен?

Çĕнĕ кил-çурта мухтатăр,
Такмаклатăр мăн кĕрӳ.
Йĕс таканлă сирĕн аттăр
Юлтăр ташласа хĕрӳ!

## ХĂНАРА ПУРĂНАТПĂР

### I

Аставатăн пулĕ, урăм-сурăм
Ташласа çĕклеттĕмĕр тусан,
Юрласа яраттăмăрччĕ юрă —
Хурăнлăх итлетчĕ катаран...

Халĕ ĕнтĕ пурăнатпăр сапăр,
Ташламасăр, юрламасăрах.
Мĕншĕнех çапла вăл, каласамăр,
Улшăнать этем туй хыççăнах?

Хăнара чухне чуна уçатпăр.
Çамрăклăх тухсан асран ума,
Шуххăн чĕвĕл-чĕвĕл калаçатпăр,
Вăтанмастпăр тĕррĕс! ташлама.

Камранах, камран вăтанмалла-ха
Ĕмĕрех пулма хĕр-каччăлла?
Хăнара пурнатпăр-çке капла та —
Иртнĕ ĕмĕр килмĕ каялла.

### II

Эсир мана чĕнетĕр хăнана
Чыслас тесе-ши е савмасăрах?
Пичĕкĕрте — чашкăракан сăра,—
Пĕр тиркемесĕр сыпăттăм ăна,
Хăвармăттăм çемçе кăмăлăра.

Хăратăп çавă ӳсĕр пуласран —
Çухатмăп-ши калас сăмахăма?
Пултарăп-ши çĕн юрă пуçлама?
Кисренмĕ-ши, эп ташласа ярсан,
Çĕн пӳрт урайĕ — сарă хыр хăма?

Тăванăмсем, мана çилленмĕр-и,
Маччаналла сăра пĕрĕхтерсен?
Хĕретмĕ-ши пите йӳç пĕрлĕхен?
Çĕн çуртăра савса, хĕвел ури
Чӳречĕртен кĕринччĕ ирсерен!

Кил-çуртăр хăтлă пултăр, кил хуçи!
Пулсамăр хăвăр ырă та пуян!
Çĕр сум-и кирлĕ, çĕр юлташ пулсан?
Питĕрĕнсе ан тăтăр çăраççи,
Хапха умне хăна килсе тăрсан!

III

Мĕншĕнех хитре-ши сирĕн çуртăр?
Таврара та ун пекки тек çук-тăр.
Хуçисем тату пурăннăран
Илĕртет-çке çуртăр аякран.

Мĕншĕнех-ши тутлă яшкăр-çăкăр,
Сĕтелсем те сирĕн пыл та сахăр?..
Çыншăн тараватлă пулнăран
Сăйăр-мулăр сирĕн мăй таран.

Ыр хăнашăн, пĕлĕш-хурăнташшăн
Мĕншĕн йывăр килĕртен тухмашкăн? —
Хапхăрсем яр уçă тăнăран,
Уçă пӳртĕр ăшă пулнăран.

IV

Қăмакара хĕлхем ялт! сирпĕнет —
Қиле хăна килессине систет.
Палас пĕркеннĕ пирĕн сарă сак,
Хăлхи урлах питне çăвать кушак.

Çил вĕрнипе юрлать урам хапхи,
Юрри ун ватă — иртнĕ ĕмĕрхи...
Қам çеç шанса кĕмен çав хапхаран?
Миçе хăна юрăпала тухман?

Тен, çав юррах хуллен юрлать хапха,
Юр хывнă çул çине пăха-пăха?..

## ХИРЕ ТУХАТЬ...

Хире тухать каллех сухаçă —
Ура çинче тепре хĕл лариччен.
Пĕлĕтсене çилсем пухаççĕ —
Чашлатăр çумăр çĕр пăсланиччен.

Аш хăпарту пек, çĕр пăслантăр,
Çилпе çӳретĕр пыл, хăмла шăрши.
Çын çăкăрпа ӳсет — пăхса тăр —
Сĕлĕпеле ташлать çăрха лаши...

Хире тухать каллех сухаçă,
Анса кашлатăр, тет, пуян тырпул.
Шывсем тинĕселле юхаççĕ,
Тăваллана чупать-çке пирĕн çул.

Сар хĕвелпе саралнă хирĕм
Шур уйăх евĕр шуралсан хĕлле,
Ялтан яла çул такăр пирĕн —
Шăнкăртатать шăнкрав сассипеле.

Кăштах канать ун чух сухаçă,
Килĕренех-çке пурнăç тулăх, мул.
Килекене хапха уçаççĕ,
Каякана сунаççĕ ырă çул.

## ЭС ЧИПЕР ПУЛАСШĂН

Пит чипер пуласшăн эс çунатăн.
Авăнасшăн хир хăви пек эсĕ,

Пулăттăнччĕ эс çыран чĕкеçĕ —
Мĕншĕн çуралман-ши эс çунатлă?
Чипертен чиперлĕхшĕн çунатăн...

Кăлтăр-кăлтăр калаçса кулмашкăн
Пулăттăнчĕ шурă кăвакарчăн,
Чĕринче вут хыпĕччĕ сар каччăн —
Мĕншĕн кăвакарчăн эс пулман-ши
Кăлтăр-кăлтăр калаçса кулмашкăн?..

Тĕнчере чипер чечек нумай-мĕн,
Вĕсенчен те пулăттăнччĕ капăр.
Тĕкĕр еннелле пăхса ан макăр:
Маттуртан маттур пĕрех пулаймăн —
Тĕнчере чипер чечек нумай-мĕн...

Хитре мар тесе хăвна, ан тарăх,
Телее сăн тăрăх валеçмеççĕ.
Хитрисем çеç пĕлĕтре вĕçмеççĕ.
Çыннăн хаклă ĕçĕ-хĕлĕ, тарĕ...
Хитре мар тесе хăвна, ан тарăх.

## ÇУМĂР ХЫÇÇĂН

Ярăм-ярăм çумăр хĕлĕхне
Илеесчĕ манăн аллăма,
Асаматăн ылтăн пĕккине
Ман кĕсле тăвасчĕ выляма.

Выльăттăм та — майлă кĕвĕпе
Янраса пĕр кайĕччĕ кĕсле.
Ырлăттăмччĕ кĕмĕл-мерчеппе
Асамат тĕрленĕ хĕвеле.

Пур çĕршывăм юрлĕччĕ манпа:
Сĕм вăрман та улăхсем, хирсем,
Çумăр хыççăн куракла çулпа
Çырларан килен чипер хĕрсем...

Инçете çухалнă аслати
Кĕçенсе иртсен аяккалла,
Урхамах утланнă ĕç ачи
Килĕ юрттарса, юрла-юрла.

Тусанран тасалнă хир çинче
Илтĕнсессĕн тăрисен юрри,
Хум кустарĕ вĕçĕмсĕр инçе
Тинĕс пек тăван колхоз тырри.

## ЧУЛСЕМ

Юхать, юхать кăлкан уки,
Хĕвел çинче чулсем çывраççĕ.
Шур чул — аттен кив кĕнеки,
Çавах аттен çыру тетрачĕ...

Сĕтелĕ пулнă шур чултан,
Çав чултанах кĕтÿç пуканĕ.
Кĕтÿ ачи çара уран
Кунта шыранă хир суханĕ.

Ту çамкине килсе ларса,
Шăл шаккасассăн выçă кашкăр,
Пушши вĕçне вутчуль çыхса
Вăл хăраман вăркăнтармашкăн.

Сывах аттен шур чулĕсем —
Юлман унта çыру таврашĕ.
Çÿлте-çÿлте самолетсем,
Йĕр хăварса, çыру çыраççĕ.

## САН АСНА ИЛМЕН ПУЛСАН...

Ху пĕлнине калаттăн эс мана,
Пит тарăна каятчĕ калаçу...

(Сахал-и туртнă хăвăн хăлхуна,
Мĕн пĕчĕкрен ăс вĕрентсе, аçу?...)

Эп сан ăсна илмен пулсан, атте,
Тăман пулсан сан хулпуççи çине,
Курассăм çукчĕ вĕççĕр инçете,
Туяссăм çукчĕ çĕр çаврăннине.

## ШĂЛТĂРТАТТĂР ЧАШĂК-ТИРĔК

Сарлака картишĕнче
Тарасаллă пусă пурччĕ.
Ватă çĕмĕрт айĕнче
Нăйлататчĕ вĕлле хурчĕ.

Кивĕ марччĕ пирĕн кил —
Çĕрĕшмен пĕр пĕрени те.
Аттесем хăварнă пил
Пурччĕ: сурăхĕ, ĕниййĕ...

Пахчара — хура мунча.
Ун тавра ӳсетчĕ çимĕç.
Виç-тăват ача-пăча
Кашниннех пулма вăл тивĕç.

Савăннă эпир ĕçре,
Мĕн кирли йăлт пулнă пирĕн.
Пурпĕрех ман çемьере
Шăлтăртатнă чашăк-тирĕк...

Шăп вуник çул каярах
Пулнине калатăп мар-и!
Унтанпа ĕнтĕ пайтах
Шутлă вăхăт иртсе кайрĕ.

Халĕ пусă куранмасть,
Мунчана сӳтсе салатрăм.
Чăр та чар ĕне сумасть,
Пĕшкĕнсе ларса, ман арăм.

Ҫуҫрăмăр ҫĕн чул ҫурта,
Ҫурчĕ пысăк — виҫĕ хутлă.
Авалхи ҫын, тупата,
Юмахри тесе те шутлĕ!

Виҫҫĕмĕш хутран ҫапла
Кантăкран килсе кур ху та:
Те ҫĕрле, те кăнтăрла —
Урамсем ялан ҫап-ҫутă.

Пĕчĕк ялăм халь хула —
Нефть хули, тăван хуламăр.
Ун пуянлăхне кура
Ырлăхра пурнатпăр хамăр.

Пурте пур ман кил-ҫуртра —
Газĕ-пăсĕ, шывĕ ирĕк...
Пурпĕрех сайра хутра
Сас парать ҫав чашăк-тирĕк!

Арăм кăмăлĕ тулман:
Хам ҫуртрах-ҫке магазинĕ!
Холодильникне туян,
Кĕпе-йĕм ҫума машина...

Пурте кирлĕ-мĕн пире!
Ҫавăнпа калатăп ҫирĕп:
Араскаллă ҫемьере
Шăп ан лартăр чашăк-тирĕк!

## ҪУНТАН ҪАЙСАН...

Сахал юлаҫҫӗ тӑвансем,
Пӗрле ҫӳрес кунӑмӑрсем —
Хуткупӑс картӗнчен сахалтарах...
Нумай юлаҫҫӗ, тӑвансем,
Сире калас сӑмахӑмсем —
Хуткупӑс кӗввинчен нумайтарах...

Юлташ, хуткупӑсна туртсам,
Янратӑр уйӑхлӑ урам —
Асаттӑр кӗмӗл уйӑх янраса.
Ҫунтан ҫайсассӑн, уйрӑлсан,
Сире ыр юррӑм юлтӑр ман
Пӗрле ҫӳренисем манӑҫмасса.

## ПИРӖН ВЫРӐН

Пыл карасӗ мар ҫӗр пичӗ,
Пур этем сӑр хурчӗ мар.
Ӗҫлекен ҫын лармӗ выҫӑ,
Ҫунсерен тӑксассӑн тар.

Пулмаллах ҫашни этемӗн
Хӑй вӗлли, йӑви пӗрре.
Вырӑн ҫӗр ҫинче ҫитет-мӗн
Ҫашнинех пӗр ӗмӗре!

Асаттен те пулнӑ вырӑн
Тӑм урайлӑ пӳртӗнче.
Пӑкӑртатнӑ вунӑ хырӑм
Тӑйлӑк-тайлӑк сак ҫинче.

Асӗпе ларма пултарнӑ
Асаттеҫӗм патшара!

Вăл юмах ярса култарнă,
Пухнă халăх хăй тавра...

Мĕскĕн те телейсĕр вырăн
Паллă тунă ун ятне.
Хăй лартса хăварнă хурăн
Асăнать ун юмахне...

* * *

Икçĕр çул иртсен, мĕн курăн?..
Ќайăп эпĕ, кайăн эс...
Пушă юлмĕ хамăр вырăн,
Хамăрăн йăва, кĕтес...

Мăнуксем унта пире, тен,
Асăнĕç хутран-ситрен.
Иртĕç ĕмĕрсем черетлĕн,
Пĕлĕт шунăн майĕпен.

Йышлă пулĕ, теççĕ, халăх,
Ӳсĕ пур çĕрте хула...
Çын хăйне тăрантаймалăх
Ӳстерейĕмĕ тырпула...

Ёненместĕп!
Пирĕн вырăн
Пулĕ ĕмĕрех таса.
Çĕр çинче те тырă вырĕç,
Тырă акĕç космоса.

Мăнуксем çĕре варламĕç.
Çăвĕ çумăр таврана,
Ќалаçтарĕ ун тумламĕ
Хамăр лартнă хурăна...

## ПУКАН

Мухтанса лараттăн эсĕ,
Чаплă, хыçлă сар пукан...
Хаклă хăнасем килеççĕ —
Эс мала шуса тухан.

Сан çинче ларатчĕ танлăн
Кукаçи е кукамай,
Çепĕç юрă эс тăнлана,
Сиккеленĕ ташă май.

Çурт илемĕ — сар пуканăм,
Чап пымасть ĕмĕрлĕхе —
Хуçусем сана халь маннă,
Лартнă тĕксĕм çенĕке.

Тайăлатăн лĕнчĕр-ленчĕр,
Ташласан хăна пўртре.
Эс камне-мĕнне пĕлмесĕр
Сан çинче ларать витре...

## КУККУК

Июль иртет. Уçланкăра
Такам ирех туптать çава.
Ут çулнă вырăн çап-çара.
Выртать пăрахăçнă йăва...

Куккук шырать çурхи куна,
Сасси ун тытăннă, куран:
«Кук-вак! Кук-вак!»—тесе кăна
Авăткалать аран-аран.

Çын кунçулне шутланăран
Сасси ун ир сӳнет-и, тен?..
Мăнаçлă, ватă сĕм вăрман,
Ăна пĕр эсĕ çеç пĕлен!

## ТĔКĔР

Тĕкĕр — чунсăр сивĕ кĕленче,
Пурпĕрех ун тĕпсĕр ăшĕнчен
Чĕрĕ çынсемех пăхаççĕ тĕлĕнсе,
Сассисем кăна çук çыннисен.

Чунсăр çын та — сивĕ тĕкĕрех,
Вăл хăйне пытарнă пит шала.
Пурăнĕ те вилĕ пĕчченех,
Қалаçмасăрах никампала.

Ванĕ тĕкĕр, вăхăчĕ çитсен,—
Сасă парĕ чунсăр кĕленче.
Мĕн хăварĕ чунсăр çын, вилсен?
Мĕнĕ юлĕ чĕмсĕр килĕнче?..

## ÇУРХИ ШЫВ

Çырантан пăхатăп та шыва —
Çурхи шыв юхать пек каялла.
Çыранпа пĕрле вара шавах
Сывлăшра вĕçетĕп пек мала...

Пурнăçра пулмасть çав унашкал —
Малаллах юхать, шавлать çырма.
Майĕпен ӳтре чакать вăй-хал —
Пурпĕр васкамастпăр ватăлма.

## ТĂВАТШАР ЙĔРКЕН

### 1. Хĕр ĕмри

Çу каçĕсем ытла илемлĕ-çке,
Çу каçĕсем кĕске-çке çав тери!
Хĕр ĕмĕрĕ çу каçĕнчен кĕске,
Çу каçĕ пек илемлĕ хĕр ĕмри.

### 2. Хĕвелпе юрату

Çут хĕвелсĕр çуралмасть пĕр кун,
Уйрăласшăн мар вăл хĕвелтен...
Эсĕ — юрату çуратнă чун,
Сӳнĕн эс те, юрату сӳнсен.

### 3. Туйсем

Сĕм вăрманăм! Ташлама пĕл
Ватăлăх туйĕсенче:
Кĕмĕл туй сан — шартлама хĕл,
Ылтăн туй — кĕрхи тĕнче!

### 4. Тăваткал

Тĕнче тăваткала хисеплемест,
Пĕр çырла-çимĕç тăваткал ӳсмест.
Хĕвел савать хăй пек çавракана,
Кĕтес чутлать этем пуртти кăна.

### 5. Сĕрме купăс

Сĕрме купăс çĕнĕ пулнипе
Каласа пăхмасăр ан мухта —
Пĕрисем чап илнĕ тĕнчипе,
Пулинех хăйсем çĕршер çулта.

## 6. Мода

Мода улшăнса пырать минутсерен,—
Ёлкĕреймĕн эс хыçран чупса.
Асаннен тухйи халь клуб сцени çинчен
Хăшпĕрин çине пăхать кулса.

## 7. Тӳпе

Тĕтĕмсене паллать пулсан тӳпе,
Сӳнтертĕр çумăр вăрçă вучахне.
Тӳпе юраттăр ял тĕтĕмĕпе
Заводăн мирлĕ тĕтĕмне.

## 8. Çĕр

Чĕрĕ мар тесе çĕре эс ан кала,
Вăл çилпе сывлать, чĕтрет вăл вулканпа.
Ҫурайман тăшманĕ те пур пулмалла —
Сивĕ космосран такам перет чулпа.

## 9. Çамрăклăх

Шăнкăр-шăнкăр валакри шывах
Шăнкăрти çырма пулать, чупсан-чупсан.
Çырмаран пулаймĕ çăл татах —
Ёшĕл çамрăклăх килмест, çӳç шуралсан.

## 10. Тăвар

Лавккара тăвар — чи йӳн тавар,—
Ҫирлĕ чух тăваршăн пыл шел мар,
Пурăнмасть çын пылакпа кăна —
Ҫирлĕ çав тăвар та ӳсекен çынна.

## 11. Пӗлменлӗх

Хӑй ҫынсене чир ертнине пӗлсен,
Хӑрамӗччӗ шӑна ҫерҫисенчен.
«Пӗлмен ҫын суккӑр»,—тенӗ авалтан,
Ҫакна этем пӗлмесӗр каламан.

## 12. Хӑна

Ҫӑкӑрпала тӑвар тени
Тату пурнаҫҫӗ ӗмӗрех.
Паян эс хӑнара ларни —
Ыран хӑна чӗнессиех.

## 13. Туй

Ҫапӑҫаҫҫӗ ҫӗленсем туйра,
Икӗ кашкӑр пӗр-пӗрне кӑшлать...
Ҫын кӑна ҫавра сӗтел тавра
Алла-аллӑн тытӑнса ташлать.

## 14. Улмуҫҫи

Ӳкересшӗн мар хӑй ҫумӗнчен
Улмуҫҫи хӗрелнӗ улмине —
Ӗненмест «улми улмуҫҫинчен
Аякка ӳкмест вӑл» тенине.

## 15. Пуҫпа ура

Пуҫ пӗчӗк те ӑс пит сахал чухне
Нумай чупма тивет урасене.
Ӑс пуҫтарса ӳссе ҫитсен этем,
Вӑйсӑрланаҫҫӗ унӑн урисем.

### 16. Шапапа шăна

«Хĕле эп улталатăп! — тет шапа.—
Эпир хĕлле вилместпĕр шăнапа!»
Çулла вара шапа шăна-тусне
Çăтса ярать, лартса чĕлхи вĕçне.

## СĂВĂÇ СĂМАХĔ

Стихван Шавлине

Тăван ялта, тăван шкулта кама кичем?
Нумайăшне паллатăн, астăватăн...
Кунçул сивви тĕссĕрлеймен çут куçлисем,
Куçлăхлисем те пур — чылайăш ватă.

Пире вĕрентнисем те-мĕн канма кайман,
Пире юратнисем пур иккĕн-виççĕн.
Чылайăшĕ киле калла таврăнайман —
Пуç хунă вăрçăра чĕрри-сыввишĕн.

Коридорта шавлать вĕт-шакăр ачапча —
Пĕрин ятне те пĕлейместĕп пулĕ.
Пĕлетĕп: хамăра хăварĕç-ха хыçа,
Вĕсем хĕвел патне вĕçмешкĕн юлĕç.

Юлташăм ман—ыр ятлă сăвăç—шавласа
Кĕнекине кĕç хĕвĕнчен кăларчĕ.
Итлекене сăмахпала пăталаса,
Аçта ларни-мĕнне йăлтах мантарчĕ.

Калаçрĕ вăл пит ăшшăн Çеçпĕл Мишшипе —
Чăваш шкулне кĕрет шинеллĕ Çеçпĕл.
Вăл ачана калать юратнă ашшĕ пек:
«Çуралнă çĕршывна, ху чĕлхӳне пĕл».

Тăван чĕлхен йӳçек-сĕтекĕ пур иккен!
Ун евĕр имĕ çук пуль хир-вăрманăн.
Эс ăнсăртран, ютра, çав чĕлхене илтсен,
Чи ырă тĕлĕкне татса, вăранăн.

Илемлĕ сăвă чĕрене пырса тивет,
Юратнă сăвăçăн сăмахĕ вичкĕн:
«...Тахçан авал пĕр кил-çуртра вăй илнĕ, тет,
Пĕр аннерен çуралнисем шăп виççĕн.

Асли пĕчĕкренех пуйма ĕмĕтленет,
Чунне сутма та хатĕр пулнă мулшăн.
Пĕр чарăнмасăр вăкăр пек мекĕрленет,
Шăлать, пухать... Ялан çӳрет хăй сулхăн.

Хĕл кунĕнче, ыйтсан, çынна вăл юр паман.
Çур ĕмĕр тӳснĕ пĕр сăмах чĕнмесĕр.
Хайхи, чăнах, пуйсах çитет, халран кайсан,
Анчах пăхать те — юлнă-мĕн чĕлхесĕр.

Тавар сутма пĕрре каять вăл пасара —
Тăр-кăнтăрла-çке аташать, мăнтарăн.
Чăлхесĕр аташсах вăл вилнĕ, тет, вара,
Ют масара выртса чунне кантарнă.

Вăталăххи юратнă çăмăл пурнăçа.
Ĕçрен, чиртен хăранă пек, хăранă.
Хăй ĕçлесе тупса курман пĕр пус укçа.
Çынсем ăна усранă та тăрантнă.

Ĕмĕрĕнче вăл пулнă çитмĕл вырăнта,
Çут тĕнчере ун пулнă çитмĕл арăм.
Хăй çитмĕл чĕлхепе калаçнă, тет, тата —
Пĕрне те путлĕрех пĕлмен, мăнтарăн.

Ҫайран арпашнă кайнă, теççĕ, ун чĕлхи,
Сӳткеленме пуçланă, сӳннĕ шанчăк.

Этем кулли пулсах вилет вара хайхи —
Ни нимĕç, ни чăваш — пĕр çапкаланчăк.

Аслисенчен йалт уйрăм пулнă кĕçĕнни,
Вăл халăхпа пĕрле ĕçленĕ çĕрĕн-кунĕн.
Ĕçре телей тупса хаваслăн юрлани
Ун пурнăçне çутатнă, ырлăх кӳнĕ.

Вăл халăхран пĕр утăм уйрăлса курман,
Пуйса, çынран иртмен, çимен тип çăкăр.
Ăна çын хисепленĕ, хăй те ютшăнман,
Хăй çĕршывне те чĕлхине юратнă нăкă.

Вăл çавăнпа та аташса вилмен ютра.
Паян та сывă, хамăр хушăра вăл.
Ун пек этем кăна тухайĕ паттăра,
Пуянлăхра телей çулне шырамĕ...»

Çапла вĕçлерĕ сăвăç ырă сăмахне.
Ăна итлерĕ ушкăн çын пĕр чунлăн.
Пиртен малтан, чунран савса хăй халăхне,
Тăван чĕлхешĕн Çеçпĕлĕмĕр çуннă.

Эпир, ун шăллĕсем, тăван ялта паян
Хĕрӳленсе çĕн сăвăсем вулатпăр.
Тăван чĕлхе хĕç пек янравлă пулнăран
Чун-кăмăлтан-çке савăнатпăр хамăр.

## АЯКРИ ХĂЙ ÇУТИ

**«Аякри пĕр хăй çутин мĕн усси пур,**
**Алă шăннă вăхăтра пулмасан...»**

(Халăх юрринчен).

Аякра-аякра хăй çути курăнать,
Çăлтăр евĕр çунать, ăшши çук.

Пурпӗрех ҫунтарать чӗрери сурана
Савнӑ тус асӑма килнӗ чух.

Ҫути пур та, савни унта мар,
Ӑмӑла пӑтрататать вӑл ҫукки.
Ӑҫсерен ҫунтарать шӗл-кӑвар —
Аякри йӑлтӑркка хӑй ҫути.

## ТӖЛПУЛУ

Лисар пиччене асӑнса.

Ҫитрӗҫ шуррисем. Утсем — шур кӑпӑк,
Хӗҫ пек тӑрса юлнӑ ҫӳхелсе.
Хыҫалти лавра —
пир витнӗ тупӑк.
Лав ҫинех пӑрахнӑ хӗресе.

Тахӑш вилнӗ.
Ҫумӗнчех йӗнерӗ.
Васкаса пытарчӗҫ вилене.
Ҫук, никам та шеллесе йӗмерӗ,
Пуп кӑна силлерӗ сухалне.

Халӑха чиркӳ патне пуҫтарчӗҫ —
Хӑваларӗҫ, пухрӗҫ килӗрен.
Хӗвеле сив пӗлӗтсем пытарчӗҫ,
Мамӑк вӗҫрӗ тирексем ҫинчен.

— Арҫынсем ӑҫта ҫухалнӑ сирӗн?!
Мӗншӗн пулӑшмастӑр патшана?! —
Шурӑ куҫӗпе хаяррӑн, сиввӗн
Офицерӗ пӑхрӗ таврана.

— Лашӑрсем ӑҫта?! Ӑҫта пытартӑр?!
Тупӑпӑр, ухтарӑпӑр йӑлтах! —

Халăх ним чĕнмест.
Пĕри çеç паттăр —
Офицер хуçа паян ялта.

Ухтараççĕ нимĕн хăвармасăр,
Нӳхрепре юлмасть ванман чӳлмек.
— Упăшкăр ăçта?!
— Килте-и аçăр?! —
Шуррисем çӳреççĕ урнă пек.

Асанне патне кĕреççĕ виççĕн —
Ик салтак та кӳршĕри пуян.
— Упăшки ак çакăн антихристчĕ,—
Тет пуянĕ шăппăн хыçалтан.

Алăри ачаччĕ, тет, аттеçĕм,
Вăл пĕлмен-ха калаçса кулма.
Штыксемпе асаннене тĕртеççĕ,
Хăратса пĕччен хĕрарăма.

— Упăшку тĕлне каламасассăн,
Çакăнтах перетĕп! — тет пĕри.
Пĕчĕкçĕ ача ак каçăхассăн
Сăпкара йĕрет шăри-шари.

Çăварне минтерпеле хуплаççĕ —
Пултăр шăп, ан вырттăр çуйăхса.
Теприсем таçтан тупса тухаççĕ
Ашшĕне, ал-урине çыхса.

Пытанма пĕлмен çав асаттеçĕм!
Ял куштанĕ сутнă чухăна.
Пуяна-çке пурнăçра пĕр техĕм —
Сутасси те суясси кăна.

Тыткăнри çынна сиксе таптаççĕ,
Тăратаççĕ чул хӳме çумне.
Тĕттĕмпе ма хупламасть-ши каçĕ?
Мĕншĕн çĕр çăтмасть-ши çаксене?..

Асаттен пит-куçĕ кăвакарнă,
Çулçă пек чĕтреççĕ тутисем:
— Революци тăшмана каçармĕ!—
Тет вăл хыттăн.—Перĕр, ирсĕрсем!

Кĕрĕслетрĕ ик пăшал пĕр харăс.
Ӳкрĕ вата.
Татрĕç ĕмĕте.
Кĕпине кас-кас çилсем лăскарĕç —
Тăраймарĕ пирĕн асатте.

Юнĕçен çĕлен пек, ял куштанĕ
Шăвăнчĕ, хăрарĕ вилерен.
Çак усал ĕçе ял ĕмĕр манмĕ,
Тухмĕ вăл ялйышăн асĕнчен.

Вăтăр çул ак иртрĕ.
Асаннеçĕм!
Халĕ те сăпка вăл сиктерет...
Асаттеçĕм ӳкнĕ вырăн ешĕл —
Каш-кашлать унта лаштра тирек.

Çуркуннеччĕ.
Асатте картишĕ
Сулхăна пытаннăччĕ çапла.
Сĕр-сĕрлетчĕ ир-ирех хурт йышĕ,
Пухнă май йăмра çинчи пыла.

Çавăн чух темле мучи măраннăн
Кĕчĕ хапхаран туяланса.
Сăнĕ-пичĕ унăн шур тăмран пек,
Шăлĕсем те пĕтнĕ тăкăнса.

Асанне патне пырса пуç тайрĕ:
— Палламастна,—терĕ,—кӳршӳне?..
Асанне шарт сикрĕ:
— Эсĕ мар-и...
Мăшăра вĕлертĕн манăнне?..

Ват старикĕн аллисем чĕтреççĕ,
Куçĕсем пăхаççĕ таçталла:
— Қаçару ыйтса кăна вилесчĕ,
Çавăнпа эп таврăнтăм яла...

Ĕлĕкхи усал мĕлке пуç тайрĕ,
Шăвăнчĕ вăл шăппăн хапхаран.
Кивĕ кил-çуртне вăл тупаймарĕ,
Ялĕнче тупмарĕ вăл тăван.

Ял урамĕ унсăр пушă мар-мĕн,
Пушă мар-мĕн ялăн кĕреки...
Аллуна тытсан та, саншăн,
таркăн,
Йӳçĕ пулĕ пирĕн ял черкки!

Вăтăр çул шăп иртрĕ.
Асаннеçĕм,
Мăнукна халь эсĕ сиктерен.
Иртнине тек асăнатăн эсĕ,
Картишне тухатăн ирсерен.

Сар хĕвел патне çӳле кармашнă,
Хӳтĕленĕ хӳмене тирек.
Вăл пĕлет хăй евĕр каласмашкăн,
Йăпатать сана кашни ирех.

Кун иртет те, каç килет кăваккăн.
Лăпкăн-лăпкăн тĕлĕрех, тирек!
Асаттен сăнне эс астăватăн,
Эпĕ те манаймăп ĕмĕрех!

*Çĕнтĕмĕр килти йывăрлăха,*
*Çĕнтĕмĕр вутра тăшмансене.*
*Манас мар, туссем, çамантлăха*
*Вăрçăран килмен паттăрсене...*

## ÇУЛСЕМ

Эпĕ утнă çулсем, юлтăр халь инçете —
Тупăсем çĕр питне чакаланă çĕрте.
Пĕлĕт пек шухăшсем
Қапланса килнĕçем
Қуççуль витĕр хăш чух асăнатăп сире:

Инçетри, Дунай-шыв леш енчи, çĕршывсем,
Çамрăклах хуйхăпа пĕркеленнĕ сăнсем...
Чуптăватчĕç пире
Тĕрмери тĕттĕмре —
Фашистсен аллинче — пусмăр тӳснĕ çынсем.

Хам тăван çĕршыва аякри çĕрсенчен
Çыру хыççăн çыру эп çырма ӳркенмен.
Эп çыраттăм, умра
Пĕлĕт пек хуп-хура
Тăшмансем каплансан, тăшмансем сирĕлсен,

Қуç умне эп астунă ачалăх тухсан,
Çут хĕвеллĕ çĕршывăм, янравлă вăрман...
Çурхи лĕп каçсенче
Çăл-валак умĕнче
Çĕмĕртсем çеçкере ларнине астусан.

Ӑршапа выляқан анасен ăшшине,
Тăрисен юррипе акасен сассине
Тепĕр хут астусан,
Эп туяттăм ялан
Қĕрешме çĕнĕ вăй, çĕн хăват килнине.

Тăшмана вутпала ăшала-ăшала
Хытăрах чăмăртатчĕç туссем пăшала.
Сталинград патĕнчен
Берлина çитиччен
Пĕрле утрăмăр эпĕр ялан малалла!

Çав тусанлă çулсем халь ытла инçетре,
Халь каяс çул-йĕрсем тăсăлаççĕ хитре.
Иксĕлми юррăма
Уççăнрах юрлама
Вăй-хăватăм вĕрет, ялкăшать чĕремре!

## УТМА ÇУЛ

Шурăмпуç енчен вăш çил вĕçсе килсен,
Сывлăм шăрçисем чĕтреççĕ вут-хĕмле.
Çĕмĕрт шурă çеçкине тăкать иккен —
Çĕрĕпех кăпка юр çунă темелле.

Çăлтăрсем çутатрĕç тăрнасен çулне,
Шăпчăк çĕрĕпех юрларĕ чăтлăхра.
Ирхине вăл сыпрĕ сывлăм шерпетне
Пыллă чечексем çинчен яра-яра.

Симĕс улăхпа илемлĕ ял хушши —
Пирĕн савнă вырăн — такăр утма çул.
Мĕншĕнех пире вăл питĕ çывăх-ши,
Мĕншĕн ун çине пăхмасăр утма çук?..

Ют çĕршывсенче те, астăватăн-и,
Çул-йĕрсем выртатчĕç тикĕс те яка.
Пурпĕр чун писетчĕ вĕсенчен, савни,
Шухăшсем вĕçетчĕç пурпĕр аякка.

Хамăр çулăмăр килсессĕн асăма,
Юрату паратчĕ шанчăк, вăй-хăват.
Малалла каймашкăн, çул-йĕре уçма
Кăкăрсем çинче выртатчĕ автомат...

Юрату сӳнмерĕ çамрăк чĕрере,
Çухалмарĕ пирĕн такăр утма çул.

Вăл — чи ырă вырăн маншăн тĕнчере,
Ун пекки ниçта та, тусăм, урăх çук.

Сывлăшĕ те уçă хамăр çĕршыврах,
Чечексем те пыллă, сывлăмĕ — шерпет.
Юрату та пирĕн, тусăм, ăшăрах,
Туслăхăмăр çутă телейпе çиçет.

## ЕНЧĔК

Шухăша кайсассăн, хăш чухне
Сак çине ларатăп та, пĕччен çын,
Ухтарса кив китель кĕсйине,
Кăларатăп пĕчĕк пурçăн енчĕк.

Чĕптĕм сар табак ун тĕпĕнче —
Маншăн ылтăнран та-çке вăл хаклă.
Вăрçăра, таçта — ют çĕрсенче—
Хам çума çак енчĕке эп çакнă.

Кам алли тĕрленĕ-ши хитре?
Кам парни-ши эсĕ, пурçăн енчĕк?
Ырă самантра, çак сехетре,
Темшĕн манăн куçăм вĕриленчĕ.

Кам пулсан та, каймĕ асăмран.
Сассине илтесчĕ. Вăл сывах-тăр.
Пикесем!
Эсир пире тахçан
Ырă тунине, тен, астумастăр...

Каялла чикетĕп енчĕке,
Ун тĕпне табак тата кăшт юлчĕ...
Адресне вутра çухатрăм-çке —
Ăшăма çунтармăш çавă пулчĕ.

## СУХАҪĂ

Ĕлĕк вăрçă ахăрнă çĕрте
Шăранаççĕ юрăсем хаваслăн.
Тракторсем кĕрлеççĕ уй-хирте,
Тулăх пурнăç никĕсне хываççĕ.

Тухăçран тӳрех анăçалла
Тăсăлса выртать çĕнелнĕ никĕс.
Ҫасă хыççăн касă уçăлать,
Хут çинчи çыру йĕрки пек, тикĕс.

Ҫасă айĕнчен килсе тухать
Бомба катăкĕ — тăпраллă тимĕр.
Ҫам ылханмĕ çавă тутăха?
Ĕмĕрех пурнасчĕ мур вăрçисĕр.

Ашшĕ вилчĕ ун ют çĕршывра,
Аслă пиччĕш вăрçăра çухалчĕ,
Ҫавăнпа мир çыруне çырать
Анасем çине паян сухаçă.

## ҪĔР ҪАВРĂНТĂР

Ах, йывăр пуль çĕр чăмăрне вĕçме,
Хуласене çĕмĕрнине тӳсме,
Вăл çаврăнать, тăвать тĕнче ĕçне.
Ах, йывăр пуль паян çĕр чăмăрне.

Ҫурмашкăн атом бомбин кăмпине,
Ах, йывăр пуль, çĕр чăмăрĕ, сана.
Этем алли çĕршер çул тунине
Ҫăлармалла-шим ĕнтĕ тусана?..

Хĕвел курма çуралнă ăрăва
Ма çунтарас пуласлăхпа пĕрле?
Ма окопсем чавас, ватса тăва?
Çĕр шăтăкне ма чĕррĕн кĕмелле?..

Çĕр сассине эсир илтетĕр-и?
Мĕскер калать çĕр чăмăрĕ пире?
— Мĕнпур этем: шурри, сарри,
хури,—
Ан хирĕçĕр хĕвеллĕ тĕнчере!

Пит йывăр-çке вĕçме çĕр чăмăрне,
Ун ырлăхне этем чысламасан.
Этемлĕхшĕн вăл — ĕмĕртен анне,
Чипер сăнне ан виттĕрех тусан!

Хыçа тусан ан юлтăрччĕ тесен,
Çунтарас мар çĕре — шăвармалла!
Çĕр çаврăнтăр, вăй-хал илсе пиртен,
Сив космосра шăнмасăр малалла!

## НУМАЙ-И КИРЛĔ ЭТЕМЕ?..

Нумай-и кирлĕ этеме,
Хĕвел çунсан, çиçсен тӳпе,
Ĕç хыçĕнчен ларса çиме
Пулсассăн çăкăр та шӳрпе?..

Нумай-и кирлĕ этеме,
Çусассăн юр, вĕрсессĕн çил,
Пĕр ĕмĕре ĕмĕрлеме
Қашнин пулсассăн ăшă кил?..

Нумай-и кирлĕ этеме?
Çĕршыв тулли пулсан туссем,

Вăй-хал ҫитсессĕн ĕҫлеме,
Телейлĕ ҫĕр ҫинче этем!

Нумай-и кирлĕ этеме?..
Тăрантĕ ĕҫ пур халăха.
Ҫут ылтăн чашăкран ҫиме
Ҫуралнисем те пур вĕт-ха!

Вĕсемшĕн хĕсĕк Ҫĕр-анне!
Вĕсемшĕн ылтăн ту сахал.
Йăлт ҫунтармашкăн тĕнчене
Куллен туптаҫҫĕ хĕҫпăшал.

Вĕсем тасан упрасшăн мар
Ҫăлтăрсене те уйăха...
Илтетĕр-и: етре те тар
Ан пăстăрах тăнăҫлăха!

Ҫук, кирлĕ мар ĕҫҫыннине
Чĕр юн тăкмашкăн хĕҫпăшал.
Янраччăр ĕмĕр-ĕмĕрне
Ĕҫ мăлатукĕпе сунтал!

## ЭС ВИЛМЕСТĔН

Пурăнмаллаччĕ сан. Пурăнмаллаччĕ,
Ҫӳремеллеччĕ сан ҫут тĕнчере.
Ҫырса пĕтменччĕ шкул кăвак тетрачĕ,
Вуламанни нумайччĕ ҫӳлĕкре...

Хĕмленейменччĕ юрату кăварĕ,
Куҫ хӳрипе ҫеҫ курнăччĕ хĕре.
Тĕнче вăрҫи сан ĕмĕтне тăлларĕ,
Вута пăрахрĕ шăп вунҫиччĕре.

Пуранмаллаччĕ сан. Йĕр тумаллаччĕ
Уйри юра çилсем юхтарнă чух,
Тар шăршине пĕлмен уй-хир мулкачĕ
Ял тĕтĕмне хиртен сăнанă чух...

Çурхи шывсем кашланă чух вăрман лек,
Шур пĕлĕте тăри тĕрленĕ чух,
Хĕпĕртемен ял çыннине курман эп,—
Анчах яла килсе эс курас çук.

Пурăнмаллаччĕ сан ялта хавассăн,
Эс пулăттăн хастарлă çĕр хуçи.
Хум кăларать халь эс хăварнă касă,
Ун хĕррипе — ем-ешĕл улмуççи...

Таврăнмасан та, пурпĕрех кĕтеççĕ
Ял çыннисем сана, сăра туса...
Шкулта кĕтес пур — паттăрсен кĕтесĕ,
Пăхатăн эс унтан тăван класа.

Çамрăккисем пурте сан пек пуласшăн,
Сăмах пуçлаççĕ ваттисем санран.
Эс пирĕншĕн пуç хунă-çке, юлташăм,
Эс çавăнпа вилместĕн нихăçан!

## ҪУРНАХ ЭСИР...

Ҫурнах эсир урасăр çын
Туя тытса ташланине,
Илтнех ачаллă тăлăх кин
Ĕсĕклесе юрланине...

Пĕрин ташши — ахлатнă сасă,
Чуна касать — теприн юрри.
Пĕрин мĕн-ма-ши çук юлташĕ?..
Ма мăшăрсăр теприн ури?..

Илемлĕ ташлĕччĕ этем,
Ылханлă вăрçă пулмасан,
Ир ватăлмĕччĕç инкесем,
Мăшăрĕсем çумра пулсан...

## ПИЧЧЕ МАСАРĔ

Выртрĕ çул Мускавран кăнтăра —
Мускавпа Симферополь шосси.
Шăрăхра чарăнса канарах:
Çунтарать-çке хĕвел — вутпуççи.

Васкамастпăр. Канатпăр эпир.
Тем чухлех чарăнса курмалли.
Вăрмансем те сăртсем, çеçенхир...
Якалман иртнĕ вăрçă палли.

Палăклă тăпрасем çийĕнче
Пур çĕрте те тем чухлĕ чечек:
Сан юну пек хĕп-хĕрлĕ, пичче,
Кăн-кăвак сан йăваш куçу пек.

Сан ятна, тăпруна шыраса,
Пит нумай тупрăм палăк-масар.
Пин-пин çын чарăнать, пуç тайса.
Эс вилмен. Эс умрах, юнашар.

Шăп тăратăн. Пăхатăн инçе.
Кăкăру çийĕнче автомат.
Сыв пулах! Тăванна çул çинче
Káска айĕн пăхса юл, ăсат.

Аннýне эпĕ калăп салам,
Салам калăп килти йăмруна...
Асăнма илсе кайăп яла
Куççульпе йĕпенмен тăпруна.

# ЧИКĔРЕ

*Поэма*

**Тăванăма,**
**Совет Союзĕн Геройне,**
**Иван Дмитриевич Зиновьева асăнса.**

Копет-Даг тăвĕсем тĕм-хура,
Копет-Даг тăвĕсем — чул хӳме.
Çăмăл мар çĕрлехи шăплăхра
Пытанса хурала çӳреме.

Сурăхсем кĕпĕрленнĕ ума,
Такăнаççĕ утсем хушăран.
Çĕрлехи пĕлĕте турама
Тӳпене çивĕч уйăх тухман.

...Улмуççи айĕнче, пахчара,
Пуçне тытнă, ларать курбаши*.
Йĕнерленĕ хура ăйăра
Тĕк тăмашкăн памасть юн шăрши.

Юнланса тапкаланчĕ тиха —
Басмачсем икĕ кун ним çимен.
Суйламасăр пусаççĕ така
Хурансем какайпа туличчен.

Çăтăр-çăтăр çунать саксаул,
Варсенче шурă тĕтĕм лăках.
Тĕтĕмпе хупăрланнă аул,
Хупăрланнă аул хуйхăпа.

---

* Курбаши — отряд пуçлăхĕ.

Макăраççĕ хĕрсем тыткăнра,
Ват хĕрарăм куççулĕ чĕтрет.
Курбашин сăнĕ-пичĕ хура,
Çапăçу пуласса вăл сисет.

Курбаши Азис-хан вăйсăр мар,
Вăл пĕлет питĕ вăрттăн çула —
Тĕттĕме пытансан тарăн вар,
Ун Иран еннелле тармалла.

Икĕ-виçĕ кĕтӳ сурăха
Илсе кайĕ хăйпе Азис-хан,
Чурасем вăл илет сутлăха —
Пикесемсĕр тухмасть аултан...

Вĕçсе тухрĕ таçтан урхамах,
Çăварта кăчăр-кăчăр тусан.
Сиксе анчĕ пăшаллă хурах:
— Хупăрлаççĕ пире, Азис-хан!

Тӳрĕрен Ирана каçмалли
Сукмака пӳлсе хунă!.. Алла!..
Пограничниксен çарĕн асли
Пăрахмашкăн хушать пăшала...

— Вăл чараймĕ пире. Ан хăра!—
Кăшкăрать Азис-хан курбаши.—
Çамрăк арăмĕ ман алăра,
Тыткăнра унăн ывăл ачи.

Салтса ярăр ханум аллине,
Илсе килĕр ăна ман пата!—
Басмачсем командир майрине
Пăрахмашкăн та хатĕр вута.

Мал енче — хĕçпăшаллă отряд,
Хыçалта — хăйăрсем, Каракум...

— Пурнăçна çамрăкла ан çухат...
Эсĕ ăслă, Тамара ханум...

Упăшку уçтăр пирĕн çула,
Юратсан, шеллесессĕн сире.
Уçмасан,— ан çиллентĕр алла! —
Вĕлеретпĕр персе иксĕре...

Ту çине хăпартаççĕ ăна.
Сапаланнă сар çӳçĕ, тусса.
— Тархасла, ӳкĕтле мăшăрна,
Вăл çул уçтăр халех Азиса...

Сывламасăр кĕтет Азис-хан,
Сасă кайрĕ çурса шăплăха:
— Ункăран ан тухайтăр тăшман!
Вилĕм çиттĕр басмач-хураха!..

Кĕрĕслетрĕ пăшал. Самантрах
Чĕркуçленчĕ хĕрарăм çĕре.
Сасă кайрĕ вар урлă таçтах,
Хирĕç печĕ такам инçетре...

Урмăшать, тулашать курбаши,
Басмачсем хĕсĕнеç ункăра.
Етресем шăхăраççĕ ши-ши!
Тĕттĕмре чул та, çын та хура.

Çапăçма хал пĕтсессĕн кăна
Шурă тутăр çĕклерĕ тăшман.
Эшкерне пăрахса, Ирана
Тухса тарнă хăй çеç Азис-хан!..

...Ир килет кăнтăра çуркунне,
Йывăç-курăк çунать çеçкере.
Астутарнăн тахçан иртнине,
Шурă палăк ларать чикĕре.

Постамент çийěнче, чěрě пек,
Сар хěрарăмăн бюсчě ларать.
Çуркунне те, хěлле те чечек
Ун умне пограничник хурать.

Курчě палăк: хура тěттěмре
Йывăççем шăпланса çывăрсан,
Пограничник çӳрет чикěре,
Çывăрмасть леш енче диверсант...

Кěç: «Тревога!..»—янрарě таçта,
Аслă йытă тухать йěр çине.
Вăл паллать хура юнлă юта,
Вăл сисет ют çěршыв шăршине.

Тытса килчěç шап-шурă ватта.
Саксаул евěр хытнă туркмен:
«Эп вилмешкěн,—тет,—килтěм
кунта...
Масара пуç таям виличчен.

Курбаши эп, басмач Азис-хан...
Сăтăр тунă... Қаçартăр алла.
Халăхран каçару пулмасан,
Вěлерсемěр персе усала...»

Курбаши уменче лейтенант,
Тěлěк курнă пек, хупрě куçа.
Амăшне аса илчě самант,
Аса илчě хăрушă каçа...

Хěрěх çул акă юлчě хыçа,
Аллă иртě, иртейě çěр çул.
Вăтăр пěрмěш çулхи çав каçа
Паттăрсен ачисем манас çук!

## ВЫРĂС ҪАПИТАНĔ

*Поэма*

**Ҫак ĕҫ 1943 ҫулхи ҫулла Веймар хули ҫывăхĕнчи Ордруф ятлă артполигонра пулса иртнĕ.**

**1.**

Пĕр чарăнми асать, урать
Асаплă юнлă вăрçă,
Çын шăпине тем хушăра
Вăл улăштарчĕ, пăрчĕ.

Вутри — вута ӳксе вилет,
Килте — йĕрет пуль тăлăх.
Тыткăнрисем тăван киле
Тепре курасшăн кăлăх.

Типмест чĕр юн, юхать-юхать,
Хăрушлăхра этемлĕх.
Мĕн пирĕн пурнăçшăн паха,
Сăваплă та илемлĕ —

Ватаççĕ тупăсем ăна,
Хакне ыйтса тăмаççĕ.
Хупларĕ пĕтĕм таврана
Сĕм пĕлĕт — вăрçă каçĕ.

Чакаççĕ Гитлер çарĕсем
Хыçалалла пăхмасăр.
Пулăшаймаççĕ «тигрсем»,
«Пантерăсем» те халсăр...

«Пантерăсем», çук, халсăр мар —
Шăвaççĕ тимĕр ту пек,
Çапах хыпса илет пушар,
Персессĕн пирĕн тупă.

Хаярланать Гудериан —
Ват генерал-инспектор.
Танксем çинчен ыйтас пулсан,
Вăл фюрера мĕн тетĕр?..

Танксем пит лайăх вырăссен,
Çапăçура пит вирлĕ.
Халь вĕсене чарас тесен,
Хăватлă тупă кирлĕ.

Тăвaççĕ тупă нимĕçсем —
Аслатирен хăрушă.
Анчах та вăрçă хĕрнĕçем
Хĕрет, ӳлет «Ҫатюша».

Васкать çут çăлтăрлă салтак,
Хыçа юлать ун килĕ.
Машинăсем... Танк хыççăн танк...
Йӳç тĕтĕм — вăрçă çилĕ...

2.

Ҫонцлагерь. Йĕплĕ пăралук.
Пĕр йывăç çук, пĕр курăк.
Пĕрре лексен, тухма çул çук,
Тĕнче кураймăн урăх.

Вите пек вăрăм бараксем.
Ҫăшлать шур лыйтă, выçлăх...
Тайкаланать çилпе этем,
Утaççĕ умлăн-хыçлăн.

— Иртен каҫчен ватаҫҫӗ чул
Имшер ҫынсем хаярран.
Вӗҫесчӗ те — ҫунатсӑр хул,
Сикес — ҫыранӗ таран.

Тӳсейменни вилет ӳксе —
Ҫӑмакара ҫӳнтарӗҫ.
Никам та йӗрмӗ хӳхлесе —
Куҫҫуль мӗнне мантарӗҫ.

Кунта кураймӑн куҫҫуле,
Вӑл типнӗ пӗр хӗвелсӗр.
Чун тухиччен сан тӳсмелле,
Сӑмах чӗнмесӗр.

Тӳсес пулать полякӑн та,
Тӳсет француз та вырӑс...
Ютра ҫухалнӑ ыр ята,
Вилсен, камсем-ха шырӗҫ?..

...Кунта кӗскетнӗ ӗмӗрне
Пӗр вырӑс командирӗ.
Путараймасть салтак чысне
Тӗрме, ристан тумтирӗ.

Ытла та ҫамрӑк капитан —
Тултарнӑ ҫирӗм иккӗ.
Тухса тармашкӑн май ҫукран
Вутла ҫунать ӑшчикӗ.

Тӑшман умне тайман пуҫа
Ир кӑвакартнӑ шухӑш.
Ума тухать, хупсан куҫа,
Юратнӑ Хӗвелтухӑҫ.

Унта вӑл ӳснӗ ачаран.
Унта тӑван кил-ҫурчӗ,—

Тӑрри пулсан та улӑмран,
Ӑшши ҫапах ун пурччӗ.

Сӗтел ҫине касса хума
Пулман-и, тен, кулачӗ;
Ҫемьешӗн пӳрчӗ шӑнӑҫма,
Тен, хӗсӗкрех пулатчӗ —

Ҫапах ҫӗршывӗ унӑнах,
Ҫӗршывӗ — капитанӑн!
Ҫӑл-ҫырмисем — мерчен, ахах,
Чӗркуҫленсе тутанӑн!

Ҫӳлте-ҫӳлте вӗҫет хӑлат,
Пӗлӗчӗсем — шур акӑш...
Асамлӑ тӗрӗ — асамат,
Пӗкки ун хир сарлакӑш.

Тӑван ҫӗршыв вӑл — тӑванах,
Ӑҫта кайсан та — сывӑх.
Ӑна юта хуракана
Ҫаклантӑр ҫитмӗл ҫылӑх!

Сакки яка-им саманан?
Сакки ун сарлака-ҫке.
Ма куҫсене хупман суран?..
Ҫынсем ма тарӑхаҫҫӗ?..

Тулта халь ирӗк ҫуркунне,
Чуна пушшех те тӑвӑр.
Лӗп ҫумӑр шывӗ урайне
Тумлать, ав, шӑпӑр-шӑпӑр.

Ӑна ӗҫеҫҫӗ мӗскӗнсем,
Пыл ӗҫнӗ пек, черетлӗн.
Ахаль ҫын мар пуль ку ҫынсем —
Вӗсем, тен, ик чӗреллӗ?..

Икшер чĕреллĕ пулмасан,
Юлайĕччĕç-и сывă?..
Кунта—ют сывлăш, ют тусан.
Инçе — хăйсен çĕршывĕ...

Кашлать ют çумăр. Аслати
Кĕмсĕртетет салхуллăн.
Аркантăрччĕ тĕрме карти,
Кĕрлетĕрччĕ вут-çулăм!

Выртаççĕ тăвăр баракра
Çынсем, çывăраймаççĕ.
Тулта пăч-тĕттĕм. Çĕр хура.
Хура концлагерь каçĕ.

Прожекторсен çути шăвать,
Автоматсем переççĕ:
Сана çуралнă çĕршыва
Тарма çул хупă, теççĕ...

Кĕç алăк уçăлать вăрт-варт,
Кĕрет пĕр самăр нимĕç.
Тусна, канать пулсан, вăрат —
Тăмашкăн пурте тивĕç.

Сывмаррисем сывалмалла,—
Ўксен, текех тăраймĕç.
Кĕтсе илеймĕ ывăла
Йăмраллă ял урамĕ.

Çилпе, тен, макăрĕ хапха,
Хăй ывăлне шелленĕн.
Сакку сан, ĕмĕр, сарлака—
Этемшĕн анлă темĕн.

Мĕнле этем?..
Аван пĕри.
Тепри —
усал,
чĕресĕр...
Ан таталтăр ыр çын ĕмри,
Усаллисен — кĕскелтĕр!

Тăрать умра усал этем,
Пусас сысна пек самăр.
Йăлтăртатаççĕ тӳмисем,
Тумланнă шукăль, капăр.

Ун аллинче чĕн саламат,
Çăварĕнче пирусĕ.
Саламатпа вăл «саламлать»,
Чĕн саламат — ун тусĕ.

Вăл вырăсла пĕлмест нумай,
Тăлмачĕ пур вĕт унăн:
— Кто есть танкист?—тет.—
Отвечай!—
Тухма хушать пĕр утăм.

Чĕнмеççĕ халсăр мĕскĕнсем,
Аслати çеç кĕрлерĕ...
Темле салтак:
— Вилсен — вилем.
Танкрах...
Сыв пулăр,— терĕ.

Ун хушамачĕпе ятне
Пулмарĕ ыйтаканĕ.
Пĕлетчĕç вырăс иккенне,
Вăл — вырăс капитанĕ.

Вăл çамрăк. Уншăн чи хакли—
Тăван çĕршыв илемĕ.
Чĕтремĕ вăрçăра алли,
Салтак хăйне шеллемĕ.

Çĕршывшăн тавăрма хăват
Шырать Раççей салтакĕ.
Алла лекинччĕ автомат,
Пулинччĕ вырăс танкĕ!

### 3.

Ват генерал Гудериан
Пукан çинчен тăмарĕ:
— Эппин, кăтартăн, капитан,
Танкист-и эсĕ, мар-и...

Сана шанса паратăп танк.
Ракета курнă майăн
Танкпа тӳрех эс çул тытăн —
Вунултă çухрăм кайăн.

Тĕл перĕç çĕнĕ тупăсем
Сан еннелле — курса тăр.
Вилсен— пытарĕç нимĕççем,
Сыв юлайсан — эс паттăр...

Аçта каясшăн, çавăнта
Сана каймашкăн чармăп.
Сан пурнăçу ху аллунта...
Эс çăлăнăн. Эс çамрăк...

Чĕнмесĕр тăчĕ капитан,
Кăвар пек çунчĕ куçĕ.
Пин çухрăмран, пит аякран,
Хăй çĕршывне вăл курчĕ.

Туйса хаваслă ирĕке,
Чĕри ун тапрĕ вирлĕ:
— Парсамăрччĕ сехетлĕхе
Мана салтак тумтирĕ.

Салтак пулса кĕрес çĕре,
Вилес, пулса чăн паттăр!
Ӳксе вилсен, ман тӳпере
Çут çăлтăр йăлтăртаттăр!

Вилес этем мĕн ыйтнине
Чармарĕ нимĕç, пачĕ.
Туртса çыхатъ пиçиххине,
Çарти пек, харсăр каччă.

Тумланчĕ пирĕн офицер,
Ыйтать: — Аçта-ха танкăр?—
Тӳпе пĕр пĕлĕтсĕр, сенкер,
Çу кунĕ ăшă, янкăр.

Совет танкне курсассăнах,
Чĕри кăлт сикрĕ каччăн.
Васка, салтак, тен, паянах
Фронт урлă хăвăрт каçăн?..

Ķаçайăн-ши?.. Фронт пит инçе...
Вăрманалла, тен, тарăн?..
Кур — полигон куç умĕнче,
Тупписене пытарнă.

Çĕн тупăсем кунта миçе?
Салтак чĕри çӳçенчĕ:
Вĕсем нумайăн. Фронт инçе.
Танкра вăл пĕр-пĕччен çех.

Малта темле пӗр чӑтлӑх пур,
Тӳремлӗх, симӗс курӑк...
Ҫут тӗнчене курса юл, кур,
Тен, юлашки хут курӑн...

Ракета вӗҫрӗ ҫӳлелле:
Вӑрман енчен ҫӗкленчӗ.
Хускалчӗ танк кӗрле-кӗрле,
Вӑл, чӗрӗ пек, чӗтренчӗ.

Ахлатрӗҫ харӑс тупӑсем,
Ҫӗкленчӗ тӗтӗм, ҫулӑм.
Чӑмӑртанаҫҫӗ аласем,
Шӑнӑрланать ҫанҫурӑм.

Ҫуталчӗ шухӑш ҫиҫӗмле,
Анланчӗ ҫамрӑк вырӑс:
Чӑтлӑхалла ун кӗмелле,
Тӑвас пулать ун ыр ӗҫ!..

Тӳнеҫҫӗ йывӑҫсем умра,
Кӗрлет тӑшман вӑрманӗ.
Часах, часах, ҫак самантра
Тӑшман йӑви арканӗ!

Лутӑрканать танк айӗнче
Пӗрремӗш батарея...
Тӑшман пур чух куҫ умӗнче
Танкист вута кӗрейӗ!

Вӑл саванать, шӑлне ҫыртать,
Татах вӑл тавӑрасшӑн.
Ҫӗршывшӑн паттӑр тавӑрать,
Юнланнӑ ӑраскалшӑн!

Ķаллех ак танк çара çĕрте.
Ун çулĕ — кукăр-макăр.
Ăна каллех тĕллеççĕ те
Переççĕ чарăнмасăр.

Танк ыткăнать кĕç пăрăнса.
Лекмест тăшман снарячĕ.
Тупăсене лутăркаса,
Пушшех танк хаярланчĕ.

Хупланчĕ иккĕмĕш йăва —
Танк тухрĕ çулăм витĕр:
— Эппин, юратнă çĕршыва
Ман ырă ĕçĕм çиттĕр!

Ĕçлерĕ хăвăрт капитан,
Снаряд кăна ан лектĕр.
Урса каять Гудериан,
Хай генерал-инспектор.

Чарма хушать вăл вырăса
Таçтан пăхса тăруçăн.
Чарусăр танк ахăрашса
Çаплах çӳрет хăрушшăн.

Ак мĕнлескер Раççей ывнни!
Тусан кусать çул тăрăх...
Тăшман йĕни те ахлатни...
Танк ăшĕнче пит шăрăх...

Хӳреллĕ çут ракетăсем
Вĕçе-вĕçе сӳнеççĕ.
Ķурмасть ăна танкри этем —
Инçе çитсе ӳкесчĕ!

Кĕрлеттерет танк çулпала
Раççей енне хăватлăн.
Тăван çĕршывшăн пăшала
Чăмăртакан сăваплă!

Тухăçалла выртать шоссе —
Вĕçтерчĕ танк, пытанчĕ.
Вăрман шăпланчĕ тĕлĕнсе,
Артполигон шăпланчĕ.

Çухалчĕ хăвăрт танк сасси,
Тухăçалла ун çулĕ.
Пăшал пенин халь мĕн усси?.
Танка чараймĕ пуля.

Санитарсем, тăна кĕрсе,
Тинех ак чупкалаççĕ.
Блиндажсенчен кĕпĕрленсе
Офицерсем тухаççĕ...

Хаярланать Гудериан
(Ун тупписем йăлт ванчăк!):
— Тараймĕ манăн аларан
Танкист-фанатик!

Ан вилтĕр. Тытăр чĕрĕлле!
Вара мана кăтартăр.
Час ун бензинĕ пĕтмелле,
Манран ăçта вăл тартăр?!.

Танк пăрăнать кĕç уялла,
Қаçать темле шыв урлă.
Тухăçалла! Тухăçалла
Çулсем тип-тикĕс, чуллă.

Пĕтсе çитет кĕçех бензин,
Сӳнет мотор вăй-халĕ.

Çук, парăнмасть хăватлă çын—
Пулинччĕ ун пăшалĕ!

Умра вăрман, хыçра—çырма.
Шыв ĕçрĕ çын — вăй илчĕ.
Ах, хăтăлмашкăн, пытанма
Умра тайга пулинччĕ!

Чупать салтак мĕнпур вăйран,
Вĕрет çил кассăн-кассăн.
Пăшăлтатать сайра вăрман,
Çынна вăл тем каласшăн.

Халран каять, ӳкет салтак—
Пĕр-ик сехет канасчĕ.
Мĕнле сас пулчĕ хыçалта?..
Кама-ха хăвалаççĕ?..

Вĕреççĕ урнă йытăсем,
Çитсе пыраççĕ. Çывăх!..
— Мĕн виличчен эп кĕрешем!
Вăй пар, Тăван çĕршывăм!..

Сикеççĕ йытăсем хăр-хар!
Те йытă, те выç кашкăр...
Выç кашкăртан фашист хаяр.
Хал пĕтрĕ-çке тармашкăн...

Тытаççĕ паттăр вырăса,
Пăркаланма памаççĕ.
Йк аллине пăрса çыхса,
Таçта лартса каяççĕ...

Ним тăваймасть Гудериан.
Грузовиксем кĕрлеççĕ.
Малта — хăюллă капитан.
Ăна тытса килеççĕ.

Малта вăл. Çирĕп ункăра,
Утать çаплах хăюллăн.
Çĕршывĕ унăн аякра,
Инçе — телейĕ унăн.

Утать. Пуçне çĕре усман.
Кĕпи ун çуркаланчăк.
Вăйсем пулмарĕç çав пĕр тан,
Тармашкăн пĕтрĕ шанчăк.

Юлмарĕ вăйĕ ӳт-пӳре,
Куçра кăна хаярлăх.
Вăл пулнă çирĕм иккĕре,
Çунат тин сарнă яшлăх!

Генерала тӳрех куçран
Пăхать ним хăрамасăр.
Ăна мухтать Гудериан:
— Чăнах та, эсĕ — паттăр.

Курманччĕ сан евĕрлине,
Эс çапăçатăн вирлĕ,
Анчах та фюрерăн çарне
Санран шеп паттăр кирлĕ...

Кĕрĕслетет пăшал. Умра
Тайкаланать çĕр пичĕ...
— Сыв пул, çĕршыв! Ята усра.
Пурнас килетчĕ питĕ...

Ӳкет салтак. Ют пĕлĕте
Курсан, тухать куççулĕ.
Салтак таçта вилсессĕн те,
Ун ырă ячĕ юлĕ!

# ТĂВАНКАССЕМ

*Поэма*

**Çăка çулçи çап-çаврака —**
**Мĕн каласа, ай, çырнă-ши?..**

Çавра сĕтел сад пахчинче,
Ларать ик ватă ик енче.
Пĕр-ик курка пылак шерпет
Ĕçсе пăхмашкăн пит ейпет.

Сĕтел çинче сар сăмавар
Вылятăр сарă хĕвелпе.
Сире эпир паллаштарар,
Ыр вулакан, ик мучипе:

Пĕрне пит çăмăл паллама
(Қашни ялтах пур ун йышши):
Çамки пуçланă çаралма,
Хура çунат пек куç харши.

Қăвак сухал кăтрисене
Лекмен-тĕр хачă тахçанах.
Хура куçсем хăна çине
Пăхаççĕ тем сăнанăнах.

Тяпук мучи вăл. Ĕшнене
Хурт-хăмăр вĕçтерет куллен.
Ялта çанталăк чĕлхине
Халь çук ун чухлĕ пĕлекен.

Қунсем хăçан уяртасса
Қалать сана эрне малтан.
Çитес çул тырă ăнасса
Қурсах тăр, вăл калать пулсан.

«Эс ватă,—теççĕ хăш чухне,—
Çултан та тухнă...» Қалĕçин!

Ĕçлет, тăвать мĕн пĕлнине.
Вăл — колхозра хисеплĕ çын.

Ахальтен мар ăна ялан
Яш-кĕрĕм питĕ кăмăллать:
«Кăштах вĕреннĕрех пулсан,
Тяпук профессор пулмалла!»

Мĕнле телейлĕ вăл паян!
Савса çĕклет тав куркине:
Ик-виçĕ çул хушши курман
Юлташĕ килнĕ ун патне.

Вăл Туймаза таврашĕнчи
Çĕн хулара пурнать иккен.
Назарпала Тяпук мучи
Юлташлă, туслă ĕлĕкрен.

...Хурăнлăхри варта пĕччен
Çӳрет Назар. Хăй лутака.
Мăкăрланать çĕр айĕнчен
Йӳç тĕтĕмĕ хурăнлăха.

Назар мучи кашни çулла
Юхтарчĕ тикĕт шăтăкра.
Ун ячĕ те, çавна пула,
Янравлăччĕ ку таврара.

Ăна çынсем куратчĕç те
Сунатчĕç ырлăх юлташла:
«Ак, кур, эс тунă тикĕте
Туянтăм. Шеп. Мухтамалла!»

Çĕрле Назар хӳшши патне
Выртма килсен ачи-пăчи,
Савăнтармалăх вĕсене
Юмахĕ хатĕрччĕ мучин.

Çырла пиçсен, ял хĕр-каччи
Сĕм вăрмана ятратчĕ ян!
Хăй хÿшшинчен Назар мучи
Тухатчĕ йăл кулса ялан.

Хĕрсем шур хурăн хуппинчен
Тăватчĕç сулă е пурак...
Асăнмалли иртни çинчен
Ват мучисен паян пурах!

Юмахлама пĕрле аван,
Пĕрле аван ĕçсе-çиме,
Халап çапма та... Ывăнсан,
Туртса ярăççĕ чĕлĕме.

* * *

Килĕштерсе, çынпа пĕрле
Çын пурăнмашкăн пĕлмелле,
Ун чух кунçул ялан çапла
Яка шăвать-мĕн тăвалла.

Назарăн ывăлĕ — Юман,
Тяпукăн хĕрĕ — Кĕтерне,—
Пĕлсех пуль ÿсрĕç ачаран
Савăнтарма ваттисене.

Сумка çакса, ялти шкула
Çÿре пуçларĕç вĕренме.
Пуçтарчĕç ăстăн çамрăкла
Этем пулса ÿссе çитме.

Назарпала Тяпук вăра,
Вĕсем çине пăха-пăха,
Хĕлле, хăй çутнă вăхăтра,
Çапатчĕç тĕрлĕ юмаха.

Пит хăвăрт ӳсрĕç çамрăксем —
Сăнран — хитре, чунпа сăпай.
Çамрăклăхра — мĕнпур илем,
Ӳсес çынра телей нумай.

Шкул пĕтерсе тухнăскерсен
Ĕмĕчĕсем ыр тĕлĕкрен
Хитреччĕ, пысăкчĕ вĕсен!
Анчах пĕрре, кĕтмен çĕртен...

Садсем ешернĕ вăхăтра
(Ăна манмасть ватти-вĕтти...)
Вут-çиçĕм çиçрĕ анăçра,
Кĕрлерĕ вăйлă аслати.

Тин каччă пулнăскер, Юман
Шур кĕпине çар тумĕпе
Улăштарса, Тăванкасран
Уттарчĕ вăрçă çулĕпе.

Хĕре хăйса чуптăвайман
Сăпай салтакăн тутине
Çуркалантарчĕ çил, тусан,
Хытарчĕ ун çемçе чунне!

Кăвак куçсем хаярлăха
Пытармасассăн та, чĕре
Манман, манман самантлăха
Тăванкасри чипер хĕре.

Пĕрле вĕреннĕ чух темме
Юратăвне вăл палăртман.
«Савни, саватăп-çке»,—теме
Именнĕ çамрăк: ах, айван!..

Çул пачĕ çĕнтерӳ ăна —
Каясшăн пулчĕ вĕренме.

...Виç хут ун хыççăн вăрмана
Сар çулçă сапрĕ вĕрене.

— Нефтяник халĕ ман Юман
Пушкăртстанри çĕн хулара...
Çук, çук, Тăванкаса манман,
Ĕрçмерĕ çеç ку хушăра.

Пĕлесчĕ сан: хула тавра
Нефть вышкисем, нефть
вышкисем!..

Курпун тусем çинче çĕрле
Кун çутинчен те çутăрах —
Мĕнпур тĕнче тĕлĕнмелле!
Итле, Тяпук, пырса курах!..

...Пĕри мухтанчĕ хулипех,
Тепри ялнех мала хурать.
Çӳле çĕкленнĕ уйăх çех
Вĕсем çине пăхса кулать,

Тулли курка тĕпне ӳксе,
Авкаланать, хуçкаланать,
Шурăмпуçне вăрах кĕтсе,
Хуллен-хуллен шупкаланать.

— Хĕр-ывăлсем хисепсĕр мар.
Вĕсем çинчен те кăшт пуплер.
Пĕри хирте ĕçлет хастар,
Тепри—нефтяник, инженер.

Телейшĕн икĕ çамрăка
Пĕрлештерме май пулмĕ-ши?
Çăка çулçи çап-çаврака —
Мĕн каласа, ай, çырнă-ши?..

**Ах, ма кĕске-ши яш чух каçĕ,**
**Ах, ма вĕри-ши хĕр чĕри?..**

Чипер хĕрсен юрри аван,
Хуткупăс çепĕç кĕвĕлет.
Çурхи хавасла уява
Кашни хăй май илем кӳрет.

Ташлаççĕ—чăрсăр çил вылять,
Юрлаççĕ — кăмăл çĕкленет.
Савниçĕм ячĕ — ырă ят,
Такмаксерен пĕр илтĕнет.

Калаççĕ пурте: «Кĕтерне...
Тăванкасра вăл ма пĕрре?..
Ялан малта вăл, ахăртнех,
Вăйăсенче, хĕрӳ ĕçре...»

Каçпа вăййа вăл килессе
Ялти яш-кĕрĕм пит кĕтет.
Ун çӳçĕ пек пулас тесе,
Хум явăнса юхать хирте.

Нефть тĕслĕ куçĕ ун, хура,
Сасси — хальччен илтмен
шăнкрав...
Чипер сăнне, пĕвне кура
Хĕр кăмăлĕ те уçă çав.

Юман, ăна чĕнсе илсен,
Сăмах тупмарĕ калама.
Пĕр урамра пĕрле ӳссен,
Мĕн-ма çапла-ши вăл, мĕн-ма?..

Вăл манчĕ вăйă пуррине,
Куç умĕнче — пĕр Кĕтерне...
Епле хăйса пĕрех хутчен
Унпа çӳресчĕ шуçăмччен?..

Ташлаттарма сар хĕрсене
Ял вăйăçи пур — Кириле.
Паян вăл вăйă картине
Аккордеон йăтса килет.

Анчах тухмаççĕ ташлама,
Такăрлатмаççĕ çереме.
— Хĕрсем, ма тухрăр урама?..
— Яш купăсçа кĕвĕçтерме!..

— Ма ташламастăр-ха, эппин?
Ан тăрăр-ха кутăнлашса!
— Кулать тата, ах, çиçтепи!
Епле ташлăр пĕлмен ташша?..

— Культура çук, çав чух сире...
Каяс киле... Час ир килет,—
Чăлт сурчĕ те шăл витĕрех,
Юнтарчĕ кутăн Кириле.

— Эс ял такмакĕсем кала!
— Кала, çĕр çĕмĕрсе ташлăр!
— Кунпа пулмасть, ку—урăхла,
Аккордеон — хуткупăс мар...

Хĕрсем кулаççĕ: «Эх, ăнман,
Каппайчăк,—теççĕ,—пуш арпа!
Ытах пăхсассăн юнтарма,
Купăсна çак та—яра пар!»

Питех çилленчĕ Кириле:
— Тухмастăп,—терĕ,—ӳлĕмрен.
Сире пĕр хĕлĕхлĕ кĕсле
Ан кирлĕ пултăр!—курăп, тен...

«Кунта ларса мĕскер усси?»—
Тесе каясшăнччĕ киле,

Анчах илемлĕ хĕр сасси
Йăвашшăн чĕнчĕ: «Кириле...»

Чим, Кĕтерне сасси-çке çак,
Епле итлемĕн вăл сасса?
Ма Кириле чĕри хавшак?
Вăл мĕншĕн ӳкрĕ хыпăнса?..

Ахаль чухне Кирилерен
Хăюллă çын çук темелле —
Ан тив, çил вĕртĕр çурçĕртен —
Карттуспала çӳрет хĕлле.

«Епле шăнмаççĕ хăлхусем?»
Тесен, «Культура...»—тет вара.
Авалхилле бакенбардсем
Мăкланнă ун янах таран.

Тӳрех калар каласси не:
Вăйăа тухсан та выляма,
Чĕри кама юратнине
Вăл систермен-ха никама.

Çак «шукăль» каччă Кириле
Хăш чух именнине кура,
Сисмен çĕртен çын сисмелле:
Ачи «çунать юратура»...

Кĕтернепе Юман пĕрле
Çӳренине курсассăнах,
Питех кӳренчĕ Кириле:
— Çакланнă,—терĕ,—
куршанак!

Вăл çавăнтах хуткупăсне
Сĕнсе тыттарчĕ Юмана:

— Ял хěрěсем ташланине
Курса ларсам, пулсам хăна!

Юман чěрçи çине çитсен,
Чун кěчě тин хуткупăса!
Чупкаласа, шукаласа
Ун пÿрнисем вěлтěртетсен,

Кăтăкланать ачаш чěре,
Тăпăртатса илет ура.
Эх, çил тухать те çил çÿрет
Вěл-вěл кěпе арки тавра!..

Çил çÿремест сар хěр тавра—
Çěмěрттерет каччи ташша!
Йăтсах каясшăн-и вара
Çав ăмăрткайăк акăша?!.

Янра, хуткупăс, ан ÿркен,
Халь вăхăт пур-ха выляма.
Кур: Алтăр Çăлтăр ÿпěнмен,
Вăл шутламасть-ха тăкăнма...

Юманăн кěввисем пит шеп,
Пит килěшрěç яш-кěрěме.
Пěр Кириле çеç кÿлешет,
Хăймасть вăл ним сăмах чěнме.

* * *

...Саланчě вăйă. Пытанаççě
Савакансем пěри... тепри...
Ах, ма кěске яш чух вăл каçě?
Ах, ма вěри-ши хěр чěри?!.

Ав, тухăçра тÿпе питне
Кас-кас ÿкет яр çутă шуçăм.

Куç сиктермесĕр ун çине
Юман пăхса илет пыруçăн.

Унта — хула. Унта пурнаççĕ
Юманăн çывăх тусĕсем.
Тăванкасран та курăнаççĕ
Вĕсем халь çутнă çутăсем.

— Юратнă ялăм, Тăванкас,
Илемленетĕн-çке куллен эс.
Ку таврара нефть тухĕ час,
Газ çунĕ, вышкăсем çĕкленĕç...

— Эх, Кĕтерне, пит хăвăрт
çитĕç
Пулас кунсем... Малашнехи...—
Тата тем-тем каласшăн питĕ
Юманăн кăмăллă чĕлхи.

Анчах именчĕ савнирен,
Кĕтернерен Юман вăтанчĕ.
Кăвак чаршав пек тӳперен
Шăрçа пек çăлтăр юхрĕ анчĕ.

Хĕр пичĕ куççульпе йĕпенчĕ,
Тем хĕстерет-çке кăкăра:
— Çулсемĕр пирĕн-çке
юпленчĕк:
Эп—колхозра, эс—хулара...

— Çук, çук, савниçĕм, апла
мар,
Вара ку пирĕншĕн чăрмав-и?
Kaçар, тархасшăн. Алă пар...
Çапла вăл хĕр тенин тăрлавĕ...

Калинккерен сад пахчине
Кěрсе çухалчě шурă тутăр.
Ан мантăр сар хěр каччине,
Ир тěлěрме выртсан та куртăр!

Юман тăхтарě кăшт, итлерě:
Хумханчě, сирěлчě вěлтрен—
Ик пěчěкçě мěлке вěлтлетрě,
Кěç сикрě тухрě тěттěмрен.

Çарапуçах, çара уран
Тăраççě кӳршě ачисем.
Шăпланнă, тěлěрнě урам,
Ма çывăрмаççě-ха кусем?..

Калаççě хайхисем çапла:
— Ним те курман эпир... çěрле...
Эпир суймастпăр: хурала
Пире хăварчě Кириле...

«Юри кăна, тен, Кěтерне
Манпа пěр каç ирттерчě пулě...
Ăçтан пěлес хěр шухăшне?
Çивěттисем хěрсен ик юплě...»

Хыпарçăсем ак сиккипе
Тěттěмелле кайса çухалчěç.
Чěре çунать вут хыпнă пек,
Вăл кěвěçет, куççем хуралчěç.

Эппин, пěр каччă кӳлешет.
Саваççě иккěн пěр хěре.
...Хуткупăс тем ӳпкелешет —
Те хурланать вăл, те йěрет...

## Хăма çинче шултра çыру:

## «Девон проспекчĕ»

Чечек çинчи хурчĕсемпе
Мăкăртата-мăкăртата,
Тяпук мучи мĕн иртенпе
Пĕччен ларатчĕ утарта.

Ял почтальонĕ Кĕркури
Ăна çыру килсе тыттарчĕ.
Хыпар ярать-мĕн хулари
Юлташĕ ун — Назар Макарччă.

Назар çырать-мĕн ак çапла:
«Аван пурнать-и, савнă çыннăм?
Яка тухманшăн ан ятла —
Эп çыруне ик-виç хут çыртăм.

Килсе курсамччĕ пĕрех хут.
Тусна манатăн — кăмăл юлчĕ.
Çула тухмашкăн пур-тăр ут —
Тăванкассен çунатлă учĕ».

Назар мучимĕр кунсерен
Хула ӳснишĕн хĕпĕртет-мĕн.
Çапла вĕçлет юлашкинчен:
«Шур хут çине йăлтах кĕртеймĕн!

Ват кăмăла эс ан хăвар,
Килсе курсам вăрахламасăр».
Йĕрке йĕрне пĕртте пăсмасăр
Ал пуснă: «Сан тусу Назар».

«Кайса курас-шим чĕннĕ чух,
Кĕтет пуль çав Назар Макарччă».

...Пĕр ирхине ирех Тяпук
Хапха умне лаша кăкарчĕ.

Хул хушшине ял кучченеҫĕ
Хĕстерчĕ те хайхи Тяпук:
— Ҫаяс-ха,—терĕ,—пит чĕнеҫҫĕ...
Ҫул вăрăм мар, халь ĕҫ-мĕн ҫук.

Тилхепине карт! туртрĕ те —
Укăлчаран тухса та кайрĕ.
Ялтан ҫул пăрăннă тĕлте
Шур хурăн курăнчĕ — пуҫ тайрĕ.

* * *

Ҫанталăк ăшă та тӳлек.
Ялсем пытаннă сулхăна.
Тяпук умне кив тĕлĕк пек
Тухса тăрать кив самана...

...Нумайччĕ халăх пасарта.
Сутатчĕҫ пушăт, чашăк-тирĕк...
Тяпук суйларĕ ҫăпата,
Пĕр алтăр йӳҫĕ турăх ҫирĕ.

Вăл ҫамрăкчĕ — вунтăххăрта,
Ҫапах ҫӳре-ҫӳре йăлт супрĕ.
Сасартăках умри сăрта
Мĕнпур пек халăх пурте чупрĕ.

— Ăҫта чупаҫҫĕ? — тет Тяпук.
— Ат каракнă анда тăткан, ди*...
Хайхи пасарăн речĕ ҫук,
Ҫурхи шыв хумĕ пек хусканчĕ.

* Унта лаша вăррине тытнă, тет. (Тутарла).

Ак йышлă халăх умĕнче
Тăрать этем. Таса вăл, вăрăм.
Пурин те куçĕ ун çинче,
Ҫалаççĕ пурте: вăрă... вăрă...

Ун питĕнчен, тăнлавĕнчен
Типсе ÿкмен-ха юн кĕсенĕ.
Ак халĕ те мĕнпур енчен
Ана хĕсет çава та сенĕк...

Ҫук, вăл чакмарĕ каялла.
Ун урлă вăркăнчĕ чукмар.
Анчах вăл кăшкăрчĕ: «Ӑлла!..
Ан тивĕр, эпĕ чунсăр мар!

Ман харсăр чунăм тухиччен
Пур сирĕн умăрта пĕр парăм:
Ҫалам сире хам ĕç çинчен —
Ҫамран, хăçан мĕскер вăрларăм...»

— Итлер-ха! — терĕç сасăсем,—
Пиртен ăçта тарса вăл кайĕ?
«Мĕнле тарам, мĕнле вĕçем?»—
Тесе пăхать аманнă кайăк.

Чи малтанах тăрăхласа
Ҫуç хĕсрĕ ватă муллана.
Ҫаларĕ вăл: «Итле, Хамза,
Вилсен, çăтмах кĕтмест сана!»

Ҫаларĕ вăл: «Хамза муллан
Пĕр арăмĕ ман чун савниччĕ.
Ана Хамза ултавпалан
Ирĕксĕрлерĕ, сутăн илчĕ».

Қаларĕ вăл: «Хамза — пуян,
Ана хĕсмен çук пурнăç терчĕ...»
Хамза хăмсарчĕ: «Эс—шайтан!»
Хăрана куçĕпе тинкерчĕ.

Ик аллине чăмăрласах
Хай харсăр çын: «Этем эп!—терĕ.—
Ман çук кил-çурт та урхамах,
Мана телей шăпи лекмерĕ.

Эп пĕтнипе макăракан
Ача-пăчам та çук, пĕччен эп.
Анчах та, ирĕкре пулсан,
Хăрамăп эп, кĕрешĕп, çĕнĕп!»

Қивелнĕ атă кунчинчен
Туртса кăларчĕ çивĕч çĕçĕ —
Куçа уçса пĕр хупиччен
Çĕççи чĕри варне ун кĕчĕ.

Вилсе те выртрĕ самантрах,
Тухмарĕ пĕр тумлам куççулĕ...
Куçне хупсассăн та, çаплах
Ун питĕнче сÿнмерĕ кулă.

Те вăл кулатчĕ Хамзаран,
Те пурнăçа вăл тăрăхлатчĕ...
Час манăçмарĕ вăл. Қайран
Ана юмах туса калатчĕç.

Çак шухăшсем вĕçленнĕ май
Тяпук мучин кĕскелчĕ çулĕ.
Хула хĕрне пырса тухма
Пĕр виçĕ çухрăм юлчĕ пулĕ...

* * *

Тĕлĕнмелле иккен кунта:
Ăçта та вышка, тем вучахĕ.
Шутлать Тяпук: ак вăл ăçта
Назар хулин чамасăр чапĕ!

Куçса çӳренĕ чикансем
Нихçан кун чул кăвайт чĕртмен-тĕр.
Кĕлте пек пысăк вучахсем
Çунаççĕ çумăрта сӳнмесĕр.

Умра шăвать — çатма-и, тен,—
Вĕр-çĕнĕ çул. Вăл çукчĕ ĕлĕк.
Вышки çине пăхас тесен,
Пуçран тухса ан ӳктĕр çĕлĕк!

Таçти-таçти урамсемпе
Хуланалла мĕн кĕнĕçем —
Ем-ешĕл садăн айккипе
Карап пек пысăк çурчĕсем...

Пасар урамĕ тĕлĕнче
Назар çуртне Тяпук пĕлетчĕ.
Анчах унта, хăма çинче,
Вулать мучи: «Девон проспекчĕ».

Шырарĕ вăл Назар тĕлне —
Ун тĕлĕ пур та, çурчĕ çук.
Аптрарĕ, чарчĕ лашине.
Çук, ĕненмерĕ-ха Тяпук.

Куçпуç арпашнă сăлтавпа
Пăртак аташрăм пулĕ, терĕ.
Çук, йăнăшман: ав, чул юпа,
Ав, леререх курнать кĕперĕ.

Урамĕнче, лаша чарса,
Хытса тăма кунта хушмаççĕ —
Кĕр-кĕрлесе те кăшкăртса
Машинăсем пĕрмай чупаççĕ.

Назарăн çурчĕ вырăнне
Вăл лашине пырса кăкарчĕ.
Пăхăр эрешлĕ чĕлĕмне
Енчĕкĕнчен туртса кăларчĕ.

Ӳпкелешет Тяпук хуллен:
«Кĕтсе ларни те кăлăхах-тăр.
Ку намăса çын куриччен
Аça кăна çапса пăрахтăр!»

Пĕлмен çĕрте çӳре-çӳре,
Халь Назара часах тупаймăн.
Вăл куçнă çĕнĕ хваттере —
Ку хулара çĕнни нумай-мĕн!

Тăрать Тяпук. Чуна пит тăвăр.
Юсакалать ут таврашне.
Вăхăчĕсем ытла-çке хăвăрт
Шуса иртеççĕ ку чухне.

Васкас пулатчĕ-мĕн чĕнсен,
Ма ырана хăвармалла?..
Аçта ӳкессине пĕлсен,
Çĕре тӳшек те сармалла...

Пĕр самантра, хăй хăнана
Килни çинчен манса кайса,
Кил еннелле вăрт-варт кăна
Пăрса хурать тăрантаса.

— Ыр лашана ывăнтарса —
Хăна пуласшăн — çӳреме
Эп ӳстермен-ха, иçмасса,
Шур сухала, çак пĕвĕме!

Мыскарана çын пĕличчен
Киле часрах çитни аван,—
Тяпук ăшчик пăшнипелен
Тухсах каятчĕ хуларан,

Анчах, пăртакçă пуç таврa
Шухăшласа, тăна кĕрсен:
— Каяс-ха,—терĕ,—кантура.
Ăна унта пĕлеççĕ, тен...

Чĕлхе-çăвар этемсене
Çитерне, теççĕ, Кейĕве,—
Тяпук мучи нефть кантурне
Пырса кĕрсе, авать пĕве.

Кăвак сухаллăскер, пĕри
(Хăйпе пĕр тантăш-и элле!)
Паллашрĕ ыррăн çав тери,
Иртмешкĕн сĕнчĕ тĕпеле.

Тяпук вара хăй нушине
Йăлт каласа пĕтериччен
Çав çын мăшăр хура куçне
Илме пĕлмерĕ ун çинчен.

Телефонпа пĕрре кăна
Шăнкăртаттарчĕ хайхискер.
Ыйтать пулас вăл Юмана:
— Ăçта-ши,—тет,—çав инженер?

Калаçнă хыççăн трубкине
Илсе вăл хучĕ иплĕн çех:

— Паян ирпе хӑйсен ялне
Вӑл кайнӑ, терӗҫ, ашшӗпех.

Тяпук чӗнмерӗ пӗр сӑмах.
Мӗскер тӑвас? Ҫаяс ялах...
Ҫула тухман ҫын тухсанах...
Тӑман тухать иккен, чӑнах!

**Тяпук мучи туртисене**
**Тӑратрӗ кутӑн ҫавӑрса.**

Ни карчӑк ҫук канашлама,
Ни чӗлӗмӗн хӑвачӗ ҫук...
Шухӑшсене сирсе яма
Май тупаймасть хайхи Тяпук.

Ара, мӗн пулнӑ Тяпука?
Ма шутламасть вӑл туй ҫинчен?
Ма сивӗннӗ пӗр тӑруках
Пулас пӗртен-пӗр хӑтинчен?..

...Тяпук, ӗнер каҫалапа
Ҫӗн хуларан килсе ҫитсен,
Темле пӑтранчӑк кӑмӑлпа
Килсе кӗретчӗ хапхинчен,
Курах каять пахча хыҫне
Ик-виҫӗ трактор пынине.

Ҫынсем те килнӗ машинпа,
Лартаҫҫӗ тимӗр кӑмака.
Хӑй килӗнче мӗнле шӑпа
Кӗтет-ши пирӗн Тяпука?

Юман Назарччӑ та таҫтан
Сиксе тухать старик умне.
Тӑсать ик-виҫӗ утӑмран
Пӗрне ҫеҫ мар, ик аллине.

Тяпук чĕнмест. Ĕнчĕкенчен
Илет те чĕлĕмне хыпать.
Хыпать те... Шăрпăк çутиччен
Унта тапак хума манать.

— Телей, Тяпук мучи! Ташла!..
Тăванкасра-çке чи малтан
Сан пахчунта нефть тухмалла!—
Савăнăçпа çиçет Юман.

Чĕлхесĕр пек хытса тăма
Пултараймарĕ вата çын:
«Çунать чĕрем ахаль те ман,
Эс вут çине ан сап краççын...»

Пытараймарĕ çиллине:
— Ан вĕç-ха эсĕ,— терĕ,— чим,
Нефть тухасси-тухмассине
Хамран ыйтма пулмастчĕ-шим?

Юман хаваслă кăмăлпа
Ĕнентерет ăна çапла:
— Кунта геологсем юпа
Лартса хăварнă. Ак, вула...

Тяпук мучи туртисене
Тăратрĕ кутăн çавăрса.
Кĕтме пулатчĕ ун чухне
Мучи темтепĕр каласса.

— Итле, эс сикнĕ сăпкана
Кам тунăччĕ хурамаран?
Тяпук кӳршӳ хальччен сана,
Юман, юратнă — хурламан.

Ăна манма юрать-и-ха?
Ма ват çынна хисеп-чыс çук?
Эс ан кĕçен, юпах тиха,
Турта курман-ха,— тет Тяпук.

Туяланса килет Назар,
Ун пуçĕнче çĕн шĕлепке:
— Мĕн харкашатăр пит хаяр?
Юман, ан тив-ха старике.

Анчах Назар тусне Тяпук
Вăрах тăрсан тин ала пачĕ:
— Çапла ӳсет-мĕн сан чапу...
Манран-и санăн кулмаллаччĕ?!!

Ыр вырăнта çуралнă эп,
Ыр вырăнтах вилесчĕ ман.
Эсир мана кун пек «хисеп
Кăтартасса» эп шутламан...

Назар мучи те чĕмсĕр мар,
Сăмах айне пулать-и-ха!..
— Апла, эппин, эпир начар...
Ман ывăлăм — юпах тиха...

Пĕлетĕн-и, эпир санпа
Ик сӳткеленчĕк — ватă супнă.
Тяпук, Тяпук... ват пуçупа
Тата кама вăрçмашкăн тупнă...

Ачи, ав, нефтьшĕн тăрмашать,
Сан пахчунта нефть пулмалла.
Тяпук калать: — Эх, тамаша,
Мĕн нефчĕ пултăр, пур хăмла...

Назар татах ăна пӳлет:
— Мана кирек те мĕн кала —

Çăвар тути кăна пĕтет,
Чакмастпăр пурпĕр каялла.

Пит çилленсе шăртланчĕ леш,
Чĕтретрĕ шĕвĕ сухалне:
— Манпа текех эс ан ермеш,
Ан мăшкăлла Тяпук ятне.

Э-э, пулас çук ĕнтĕ сана
Тяпукăн хĕрĕ сарă кин.
Çыртма тăрсан та, чавсуна
Çыртаймăн ĕнтĕ халĕ тин.

Назарăн та сăмахĕ пур,
Тяпук вăрçни мĕн япала!
— Кĕнекӳне уçса ан хур,
Çырманнине эс ан вула...

Хăта, пуççапмăпăр вара,
Тавра ялта хĕрсем пĕтмен.
Çӳпçи — хупăлчине кура,
Тесе калană ĕмĕртен.

Çитет сана, хăвна пĕлсен,
Эс хăв пикӳшĕн ан тавлаш.
Эй, хуранта хур пуç пиçсен,
Хура кушак та хурăнташ!..

Ăçта унта Тяпук мучин
Ятлаçнине тек итлесси!
Çырма енчи лутра мунчин
Чĕтрет тăвата кĕтесси.

Машинăсем кĕрленипе
Выляççĕ вак хумсем шывра.
Савăннипе, тĕлĕннипе
Ташласшăн тайăлнă йăмра.

* * *

Чун тарăхне пĕр никама
Уçса пама пĕлмесĕрех
Тяпук уттарчĕ урама —
Çунмаллипех çунать чĕре:

«Пулмасть пуль тусĕпе Тяпукăн
Пĕр сак çинче тек ларасси.
Ӳкĕтлеме чĕлхем ман чухăн,
Ӳпкелешсен те çук усси...»

Çил кăларса, хыпаланса
Чупать ун хыççăн Кириле.
Такам ăна ятарласа
Темле ĕç хушнă темелле.

Вăл пит юрасшăн Тяпука.
— Хуйха ӳкмешкĕн ир-ха,— терĕ,—
Леш Юманне калатăп-ха,—
Ялта ăна мĕскер çитмерĕ?

Пăсса çӳрет çын пурнăçне.
Пит кутăн çав Назар тавращĕ.
Ăна савмарĕ Кĕтерне —
Вăл çавăнпа халь тавăрасшăн...

Шăп пычĕ-пычĕ те мучи,
Тăп чарăнса, çапла каларĕ:
— Тата мĕн тесшĕн, шăкăлчи,
Эс те кĕрӳ пуласшăн мар-и?..

Ĕçне ĕçлесчĕ лайăхрах,
Вара манпа килсе калаç.
Ăсу-пуçу мăскал çукрах,
Чĕлхӳ вара сан çич хăлаç!

— А сирĕн чĕлхĕр вĕлтĕрен.
Тек калаçсан тата тем куран,—
Сăмахĕ çитрĕ Кирилен,
Аптранипе çыртать тип курăк.

* * *

Хĕлхем хыпмарĕ çăвара
Тяпук мучи яра кунах.
Тискер çӳрерĕ, пуç тавра
Сĕм пĕлĕтсем капланнăнах.

«Хурт-хăмáрсемшéн пит начар
Пулать-çке, вышкăсем килсен...»
Куç умĕнчен каймасть Назар,
Тухмасть ик шухăш пуçĕнчен.

Пĕр шухăшĕ калать çапла:
«Çума пĕр вышка ларнипе
Тяпукăн пит савăнмалла».
Тепри калать: «Нефть шăршипе
Пуçна ан çавăр-ха, Тяпук,
Колхоз пек ырлăх урăх çук.

Мĕнпур енчен тăван яла
Хупăрласан нефть вышкисем,
Вара ун чух мĕн тумалла?
Мĕн ĕçлĕç меллĕ аллусем?..

Назар çуртне куçарнă пек,
Çуртна та час куçарĕç, тен.
Ват йăмрапа яштак тирек
Ларса юлаççĕ пуш çĕртех...»

Вырăнĕнче ларинччĕ çеç
Кил-çурчĕ ĕмĕр иртиччен.
Ан пистĕрччĕ чĕвĕл чĕкеç
Лутра лупасĕ айĕнчен.

Кунта-ҫке вӑрӑм ӗмӗрте
Тӑрмашнӑ ун аслашшӗ те,
Ун ашшӗ те хресчен ӗҫне
Вӗрентнӗ пӗчӗк ывӑлне.

Теприншӗн вӑл нимех те мар,
Анчах Тяпукшӑн пит паха:
Ҫак вырӑнти турат-тымар
Килет иккен йӑхран йӑха.

Картишӗнчи шыв валашки,
Хӑмлаллӑ шурӑ шӗтӗрнек
Хальччен пулманччӗ ытлашши,
Ак сикрӗ тухрӗ пӗр инкек!

Кӗтернепе ҫак касхине
Тяпук каласрӗ ик сехет.
Вӗсем мӗскер калаҫнине
Сехет куккукӗ ҫеҫ пӗлет.

Тяпук мучи Кӗтернене
Мӗнле пӑхса ӳстернине,
Хӑй мухтанма юратманран,
Калать пӗр-ик сӑмахпалан:

— Колхоз ҫын турӗ,—тет,—эртел...
Эс пӑх-ха хӑвӑн ҫинелле.
Ну, кам сана, кам, ҫут хӗвел,
Тяпукӑн хӗрӗ темелле?

Мӗскер ҫитмест ӗнтӗ сана?
Вӗрентӗн лайӑх—вунӑ класс.
Эс ӑнлантар ват аҫуна:
Колхоз пӗтсен, ун мӗн тӑвас?..

Куратӑн, пирӗн пахчара
Мӗн хӑтланаҫҫӗ. Ӗҫ начар...

Хуллен-хуллен пурсăмăра
Çыран айнех тĕртет Назар.

Вĕт ун ачи манран кулать!
Тĕсне-мĕнне хам кил-çуртра
Тек курам мар — хăйнех кала:
Ан явăнтăр вăл сан тавра.

Хам хĕрĕме усал туса,
Эп пиллĕп-и савман çынна! —
Тяпук мучи хыт калаçса
Выртма тухать шур чăлана.

Выртас чухне курать Тяпук:
Кĕтмесĕр вăхăт çитессе,
Пуçне кăларчĕ те куккук
Пĕр-иккĕ авăтрĕ тĕсе...

Яр-уçă кантăк умĕнче
Çаплах ларать-ха Кĕтерне.
Шур çĕмĕртсем сад пахчинче
Тăкаççĕ шурă çеçкине.

Тăкмаççĕ çĕмĕртсем çеçке —
Хĕр куçĕнчен тумлать куççуль.
Атте сăмахĕ йывăр-çке,
Кашни сăмахĕ — шĕвĕр чул.

Тулта çĕр тĕттĕм. Уйăх çук.
Савни те çук паян çумра.
Хĕре каччисĕр канăç çук —
Мĕн усси пултăр уйăхра?..

Садра сар кайăк йăвара
Ларать пуль тутлăн тĕлĕрсе.
Савниçĕм, эсĕ асăмра,
Асăмра çеç-и — чĕрере.

Чӳречере пур хӑй ҫути,
Вӑл сӳнес ҫук ӗнтӗ ирччен.
Ҫук, илтӗнмест савни утти,
Ҫук, хумханмасть кӑвак сирень...

Ак хӗр арки ҫине тултан
Вӗҫсе ӳкет кӑвак конверт.
Ҫыру, ҫыру! Анчах камран?
Ҫӗр варринче халь кам ҫӳрет?

Конверт ҫинче сап-сар чечек,
Ҫырӑвӗнче те чӑп-чӑпар...
Алли паллана алӑ пек,
Анчах та ячӗ паллӑ мар.

«Ҫыру ҫыратӑп. Аван-и!
Яка хута пӗр хуратса,
Хут хуратса та мар, савни,
Сана чунтан-ҫке юратса.

Эп хӑшкӑлатӑп-ҫке, туйсам,
Пӑхсамччӗ эс ман еннелле.
Эс асӑмра чух эп нихҫан
Курмастӑп ҫутӑ хӗвеле.

Чӳречӳне уҫса хурса,
Урамалла пӑхса ларсам.
Купӑсӑма туртса ярса,
Эп юрату юрри юрлам».

Нӑртлатрӗ купӑс пӗр хутчен
Ҫав вӑхӑтра ял илтмелле...
Анаталла май пӗр-пӗччен
Иртсе пырать-мӗн Кириле.

**Кӑшт шухӑшласчӗ туй ҫинчен,**
**Килӗштересчӗ пӗр хӗре...**

Йӑмрасенчен те ҫӳлерех
Ҫӗкленнӗ вышка патӗнче
Паян ир, кӗтӳпе пӗрле,
Хастаррӑн тытӑнчӗҫ ӗҫе.

Тӑвата мӑн кӑмакара
Кӗрлет вут-ҫулӑм, тулхӑрать.
Пӗри вара ҫав вӑхӑтра
Пӑс пӑрӑхне уҫса ярать.

Котельнӑйран ши! шӑхӑрса
Каять вӗри пӑс.—Ну, пуҫлар!—
Манометр ҫине пӑхса,
Йӑл кулчӗ ҫамрӑк кочегар.

Чӗтренчӗ вышка, ҫӳллӗскер,
Блок тӑрӑх шӑвӑнчӗ канат.
Пит лӑпкӑччӗ кунта ӗнер,
Паян хӗрӳ ӗҫ тапранать.

Ҫанталӑк шӑрӑх кунӗпех,
Пит сӳрӗккӗн ларать йӑмра.
Тарланипе ҫӳҫпуҫ йӗпе —
Шыва чӑмасчӗ, авӑра!

Витре тулли ҫырла татса
Ҫулпа килеҫҫӗ сар хӗрсем.
Нефтяниксем патне пырса,
Чунтан сӗнеҫҫӗ: «Илӗрсем...»

Ма илмӗн-ха хӗр аллинчен,
Куҫ хӳрипе кулса парсан?
Вылясчӗ кӑмӑл туличчен
Хӗрпе каччин, вӑййа тухсан...

Хирти ёҫрен килекенсем,
Никам чӗнсе хушмасăрах,
Пуҫтаранчӗҫ курма тесе:
«Чăнах, нефть пур-шим пахчарах?..»

Пӗрне-пӗри пӳле-пӳле,
Пуҫларӗҫ хыттăн шавлама:
— Кунтах тухать-шим?.. Ай, телей!
— Тухать пуль ҫав ӗнтӗ, кума...

Пӗлменнине тӗпчес йăла
Пайтах хальхи хӗрарăмсен:
— Ку мӗн тума?.. Мӗн япала?..
— Ма нефть тухман кунта
хальччен?..

Ҫиҫсе-кулса илет Юман,
Персе ярать вăл тӗлсӗрех:
— Сăмахӗ кайӗ вăрăма,
Анчах ăнланмăр пурпӗрех...

Ятарласа эп тепӗр чух,
Тен, вулăп лекци... май пулсан...
— Асту, юлаймӗ ҫӳҫ пӗрчӳ,
Халех вула!..
— Вула, Юман!..

— Вӗреннӗ вăл ҫынран кулма!
Пире вăл «тӗттӗм» тет пуль-ха!—
Хăлаҫланса тухать ума
Шкулти уборщица Улька.

Чечеклӗ шур тутăрӗпе
Чӗркенӗ хăй ик-виҫ хаҫат:
— Кала пурне те йӗркипе,
Эпир итлетпӗр, хăямат!..

Шалтах аптрарĕ хай Юман,
Итлес пулать-мĕн халăха.
Тӳрех персе ярас пулман
Пĕр тĕлсĕр-мĕнсĕр сăмаха.

Вăл, ушкăнран аран хăпса,
Пĕр тĕмеске çине тăрать.
Ăнланмалла сăмах тупса,
Çын кăмăлне уçса ярать:

— Қалав пуçланĕ аякран.
...Миллионшар çул ĕлĕкрех
Çак вырăнта тип çĕр пулман,
Шавланă пысăк тинĕс çех.

Çав тинĕсри чĕрчун тĕнчи,
Хуллен-хуллен вилсе пырса,
Пытаннă тинĕс тĕпĕнчи
Хăйăрпала купаланса...

Çав вилесен юлашкинчен
Нефть пулнă, теççĕ, каярах...
Халь нефть сийне çитес тесен,
Çĕр шăтарас пулать вăрах...—

Ăнлантарать, калать Юман
Аппасене, инкесене.—
Патша чухне краççын ыйтма
Раççей хăй кайнă кивçене...

Усламçăсем, ютран килсе,
Ăмсаннă çак пуянлăха,
Пайтах çаратнă-мĕн вĕсем,
Хур тунă тĕттĕм халăха...

Қалав вĕçленчĕ. Тӳперен
Қаç сăнĕ çапрĕ катана.

— Тавах, Юман, тата тепре
Ҫилсе итлесчĕ-ха сана...

Таҫти-таҫти вăрман ҫинче
Сӳнсе пĕтменччĕ-ха кăвар...
Улька темме юлать пĕччен:
— Юман, ларар-ха,—тет,—ларар...

Ларать Улька, пуҫне пĕксе,
Хăй ним чĕнмест. Тен, вăл йĕрет?
Шывланнă куҫ хăрпăкĕсем,
Ачаш ҫӳхе тути чĕтрет .

Мĕн пулнă пирĕн Улькана?
Мĕскер ыйтасшăн Юманран?
Ларсан-ларсан, хуллен кăна:
— Ан тĕлĕн,—терĕ,—эс манран...

Эсир пĕри те юратма
Пĕлместĕр пулĕ чĕререн.
Савни ман пурччĕ савăнма —
Ҫын уйăрчĕ пĕр-пĕринчен...

Ман ĕмĕте татаканни
Эс пултăн. Хуҫрăн кăмăла...
Ҫаччи те пулчĕ айванни:
Ҫил ăҫталла — вăл унталла...

Ĕсĕклесех йĕрет хайхи,
Тутăрĕпе куҫне шăлать.
Чĕри варне хуйхи-суйхи
Ҫĕрсе вырнаҫнă-мĕн шала...

Хĕре тытса ик аллинчен,
Юман калать: «Мĕн тесшĕн эс?
Эп ҫын ҫулне хальччен пӳлмен,
Мана сан мĕншĕн ӳпкелес?..»

— Эппин, эс ман Кирилене
Илсе каясшăн колхозран?..
Куçатăп, тет вăл, нефть ĕçне...
Эс илĕртетĕн пуль, Юман...

— Ахаль калать. Чĕнмен пачах.
Йăлăнтарасшăн вăл, Улька.
Шут шăрçинчен ĕçчен качча
Кам уйăрма пултарĕ-ха?

— Çук, çук, шанмастăп сăмахна,—
Улька куççулĕпех йĕрет.—
Мĕн пулнă-ха апла ăна,
Мĕн-ма вăл пăрăнса çӳрет?..—

Сăмах чĕнмерĕ тек Улька,
Тăрса, пĕр сассăр алă пачĕ.
Сад айĕнчи тăкăрлăка
Кĕрсе кайса, куçран çухалчĕ.

* * *

Кирилене хăй килĕнче
Мĕн иртенпех ятлать ват амăш:
— Сана пула ял умĕнче
Сăмах илтетĕп, чун çунтармăш!

Ват çынсемпе ĕретлĕрех
Калаçмалла. Ан кайтăр ят.
Пĕр хăлхунтан сăмах кĕрет,
Тепĕринчен тухса каять.

Хуткупăсна çутăличчен
Турткаласа тек ан çӳре.
Сан шухăшласчĕ туй çинчен,
Килĕштерес пĕр-пĕр хĕре...

— Ҫама илес вара, анне,
Хама пӗри те савмасан?
Ҫӳме кӳлсе, Силпи ялне
Хӗр вӑрлама каяс-и ман?..—

Паян вӑл ҫирӗм пиллӗкре,
Паян шӑпах ун менелник!
Анчах ҫын ҫук кӗрекере,
Сӗтел ҫинче те ҫуккӑ ним.

— Ашчик пӑшать. Аҫта курка?
Тултар, аннеҫӗм, ан шелле...

Ват амӑшӗ лӑрка-лӑрка
Ҫӗрсе ҫухалчӗ тӗпеле:

— Ҫынсем те писрӗҫ вӗт санран.
Аҫтан юраттӑр Ҫӗтерне?
Эп ват пуҫпа та чухлакан
Сана вӑл мӑшӑр маррине.

— Эх, мӑшӑр мар ҫав, мӑшӑр мар...
Эп ик кун ҫырнӑ ҫырӑва
Ҫурса лӑрахрӗ чӑр та чар.
Сӳнтерчӗ ман юратӑва.

«Тек вӑхӑтна сая ан яр»,—
Тесех каларӗ... Мӗн тӑвас?
Юман пӗтерчӗ ҫав, Назар...
Ҫӗр чавакан шӑшши, тыркас...

Тухса кӗрем-ха урама.
Хӗрсем пӗтмен-ха — ял тулли.
Вӗрентӗп эп манран кулма!
Ҫурам, кам пулӗ ял кулли!

Крыльца çине купăссăрах
Тухать ак хĕрнĕ Кириле.
Пуçне кайнах хаяр сăра —
Тĕнче халь уншăн тӳнтерле.

Тулта çĕр тĕттĕм. Урамра
Çилпе каш-каш кашлать йăмра.
Те сив пăра, те çумăра
Тӳпе те, çĕр пек, тĕм-хура.

Çил тусана шăлать çулпа.
Таçта-таçта, ял хыçĕнче,
Такам вылять пек шăрпăкпа...
Кĕмсĕртетет пӳрт тăрринче...

Кĕтернесен кил-çурчĕ те,
Çил сассипе тĕлĕрнĕ пек,
Шăпланнă. Хупă чӳрече.
Сад çуталмасть хăй çутипе.

Хапха енне вăльт вăйкăнса
Вĕçсе иртет çара çерçи.
— Çак хапхана вараласа
Тикĕтлесен, мĕн пулĕ-ши? —

Тăп чарăнать те Кириле
Çĕн хапхана пăхса тăрать:
— Çырсах хурас тикĕтпеле:
«Тяпук мучи хĕрне парать!»

Хĕрĕнкĕскер, хапха умне
Пырса çитменччĕ — тĕттĕмрен
Такам алли Кирилене
Ярса та тытрĕ хулĕнчен.

Хăранă каччă шарт! сикет,
Вăл каялла чакса тăрать.

Кĕлте пек çиçĕм ялт! çиçет,
Тӳпе чаршавĕ уçăлать.

— Эс хуралта-и-ха вара?—
Ыйтать умрах Юман сасси.
— А сан мĕн ĕç пур ман çумра?..
— Пĕр-ик сăмах пур каласси...

Шăртланчĕ ӳсĕр Қириле:
— Қалаç,—тет,—ав, савни пур сан...
Хуллен-хуллен ак сирĕлет
Ун мухмăр-сухмăрĕ пуçран.

Юманăн вăйлă кĕлетки
Хăратрĕ-шим ăна пăртак?
Асне, тен, килнĕ ĕлĕкхи...
Хăйсем ача чух, тапăрта,

Ял вĕçĕнчи çирĕклĕхре,
Вĕсем кĕрешнĕччĕ пĕрре...

Лăшт кайрĕç каччă аллисем:
— Қаçар... Эп йăнăшрăм, паллах...
Ман менелник паян. Қичем
Пĕччен килте ларма. Çапла...

Атя пĕрле ларар ирччен.
Эп пусрăм çирĕм пиллĕке.
Эрехĕ пур, ĕçес тесен,
Тен, пырăн... Қилĕш, ан тирке.

Юман чĕнменнине кура
Уттарчĕ вăл хăй еккипе.
Шăпланнă тĕттĕм урамра
Ташларĕ çумăр çĕрĕпе.

**Туй урхамахĕ витере**
**Кĕçеннине илтетĕр-и?**

Çырма енчи пахча вĕçне
Тяпук мучи çитсе тăрсассăн,
Шак хытрĕ, сулчĕ аллине,
Пĕр-ик хутчен сывларĕ ассăн:

— Каллех кулаççĕ Тяпукран!
Нумай пулмасть пахчам чиперччĕ.
Паян, ав, шăтнă пăрăхран
Нефть тухрĕ те йăлтах пĕтерчĕ!..

Пĕтерчĕ нефть çĕрулмине,
Пахча вĕçне те нефть хуратрĕ.
Мĕн ĕмĕрне курманнине
Назар ачи мана кăтартрĕ.

Илтмест çав вышка Тяпука.
Мучи пушшех те хурланать.
Çул çумĕн ӳснĕ курăка
Сирсен те, тикĕт курăнать.

Саркаланса, карталанса
Ун хурĕсем килеççĕ йышлăн —
Те тикĕтлĕ шыва чăмса
Вараланса пĕтсех-ха ишнĕ,

Те юриех нефть хуранне
Кĕрет айван хур-кăвакал!
Каплах пулсан, хур тукмакне
Тутанаймастпăр пуль кăçал...

Выртать Тяпук утарĕнчи
Хуп витнĕ пĕчĕк хӳшере.
Ăна иртен мĕн пулчĕ-ши?
Ма ыратса тапать чĕре?

Ҫитсен те утмăл саккăра
Ҫӳретчĕ шеп, тĕрĕс-тĕкел —
Хыпман пилюли ҫăвара,
Ĕҫмен пĕр кашăк йӳҫ эмел...

Ăна хальччен тытман сивле,
Сунас ерсе курман ватта.
Хурт-хăмăрах сĕрле-сĕрле
Ӳсterнĕ, тен, вăй-хăвата?

Чĕре сикет, утма ҫук хал —
Мĕн пулчĕ халĕ пĕр тăрук?—
Йĕпе ҫине сапа кăҫал
Сахал-и курчĕ ват Тяпук?..

Шап-шур халатлă медсестра
Пит тимлĕн пăхрĕ Тяпука.
Вăрах итлерĕ, ҫурăмран
Пӳрнисемпе шакка-шакка.

— Больницăна кайса, пăртак,
Тяпук мучи, сан канмалла —
Ҫын пурнăҫĕ ялан пылак
Пулмасть, пĕлетĕп, ватталла...

...Леҫсе хăварчĕ Кĕтерне
Больницăна ват ашшĕне.
Тухасшăн марччĕ килĕнчен
Тяпукĕ чирĕ иртиччен.

Ҫул тăршшĕпех лăрка-лăрка
Хăртса вăл пычĕ Назара:
— Тыттармăп урăх пĕр курка
Ăна эп хамăн пахчара...

— Курман пуль санăн куркуна
Назар мучи, асту, атте...

Упрасчӗ хăвăн сывлăхна —
Пӗрре-çке пурнăç ӗмӗрте.

— Çапла пӗртен-пӗр ӗмӗре
Пăсма парас-и тăшмана?
Ан курнă пул эс тӗлӗкре
Шăлйӗрене, çав Юмана.

...Сухалӗ тухтăран кăвак,
Куç харшисем ун тӗм-хура.
Çуса якатнă шур калпак
Хӗл Мучинни пекех пуçра.

Вăл куçлăх витӗр Тяпука
Шăтарасла пăхсан-пăхсан:
— Каламалли чăн сăмаха
Пытармăп,—терӗ,—ват çынран.

Чӗрӳ хавшанă сан, Тяпук,
Çывăраймастăн-мӗн çӗрле.
Сехӗрленсе ӳкмелӗх çук —
Пуçна ан ус, çӗкле çӳле!

Пӗр шухăш, кăйкăр кайăк пек,
Унта сан çавăрнă йăва:
Ыр канăç, ыйхă çукка тек,
Тек чăтаймастăн шăв-шава?..

Пăрах çав шухăшна, Тяпук,—
Киревсӗр шухăш кирлӗ мар.
Пытармалли санран ним çук —
Тарăхтарать сана Назар...

Тарăхтармасть тусу Назар —
Хăвна хăвах эс çунтаран:
Пӗр шăрпăкран тухать пушар,
Тухман çӗртен тухать тăман.

Эп тӗрӗсне калатӑп-и?
Суймастӑп-и сана, Тяпук?
— Ҫӑмӑлланать чӗре таппи
Санпа ларса калаҫнӑ чух...

* * *

Кун хыҫҫӑн кун иртет ҫапла.
Выртать Тяпук палатӑра.
Турра шанман этем,—шутла!—
Шанать асамҫӑ тухтӑра!

Ыр тухтӑрсем пулӑшнипе
Каҫ ҫывӑрма пуҫлать хайхи.
Сехет шакканӑ майӗпе
Пӗр татӑлмасть ирччен ыйхи.

...Сас-чӳ вӑратрӗ Тяпука —
Тул ҫутӑлма пуҫланӑ та!
Уҫӑҫҫӗ шурӑ алӑка
Медсестрасем коридорта.

Вӗсем хуллен пӑшӑлтатни,
Чӑштӑртатни илтӗнкелет:
Тӑванкасри чӑваш ҫынни
Тем инкеке халь лекнӗ, тет...

Темле нефтяник-йӗкӗте
Самай ҫунтарнӑ, тет, пушар...
Чӑпар халат пӗркенчӗ те —
Тухать Тяпук: пӗлме хыпар.

Вӑл курчӗ нефть турттаракан
Палланӑ вырӑс ачине.
Пӑшӑлтатса ыйтать унран
Тӑванкасра мӗн пулнине.

Ак, куç умне тухать пахча,
Тяпук пахчи. Йăмра, тирек...
Сирет çут вышка сĕм каçа,
Тӳпен сĕм чатăрне тирет.

Ĕçлеççĕ паттăр йĕкĕтсем,
Шалтан-шала кĕрет пăра.
Сасартăк ялкăшрĕ хĕлхем —
Вут хыпрĕ пĕтĕм вышкăра...

Мĕн пулнине тӳрех пĕлмен,
Аптранă кайнă ним тума...
Пожарниксем çиткеличчен
Вут тытăннă хĕрсе çунма.

Вăхăтсăрах газ çулăмĕ
Ялкăшасса кĕтмен Юман.
Сиссе илет çанçурăмĕ
Ыратнине ытла кайран...

Çунакансkер, чăмать шыва —
Шывра кăна сӳнет хĕлхем.
Шăпăртатса ларать хăва,
Ĕннех-çке унăн çулçисем...

* * *

Выртать Юман палатăра,
Ал-урине бинтланăскер,
Хаяр, хăрушă вăрçăра
Вута кĕрсе те çунманскер.

Выртать хăй паттăрлăхĕпе
Газ хăватне сӳнтернĕ çын.
Ыратнипе çăвар типет,
Ăшра хыпса çунать краççын.

Ҫанаш тăваççĕ тухтăрсем:
— Ҫирлех чĕр ӳт, кирлех чĕр юн.
Халех ăна имлемесен,
Ун пурнăçĕ — ик-виçĕ кун...

— Аçтан тупар ăна çĕрле?
— Юнпа ӳте ăçтан тупас?
— Юнне парасшăн Ҫириле! —
Тяпук илтет таçтан пĕр сас.

Вăл аслă тухтăр пӳлĕмне
Пырса кĕрет ирпе ирех:
— Ман юнăма, Тяпук юнне,
Ҫирлех пулсассăн,— илĕрех!

Вăл хӳтĕленĕ пушартан
Ман утарпа хăй вышкине.
Чăн паттăрах иккен Юман,
Пĕлменччĕ эп вăл мĕнлине!

Анчах та тухтăр килĕшмест:
— Эс ырă çын — сăмах та çук.
Халь сывалсах çитмен-ха эс,
Юну хăвна кирлех, Тяпук.

Илетпĕр юн Ҫирилерен,
Юрать ун юнĕ Юмана.
Тăван пек пулĕç ӳлĕмрен
Ик çамрăк каччă ялана.

* * *

Тяпукпала ват тухтăр туслăн
Ларaççĕ пĕчĕк пӳлĕмре.
Ҫитмĕлелле ик ватă пуснă,
Нумай-çке курнă тĕнчере.

Вăрçа та кайнă, юн юхтарнă,
Сыватнă тухтăр салтака...
Сахал çынна-и вăл хăтарнă —
Вăхăчĕпе пĕлмен ыйха.

Тяпук çине пăхать вăл ыррăн,
Çурăмĕнчен лăпкать тусла:
— Эс çирĕм пилĕк пин сум хыврăн,
Ху танк тутартăн — шухăшла!..

Çĕн танксене бензин халь кирлĕ —
Вăл пур-мĕн санăн пахчунта!
Çĕнтерес çук сана ним чирĕ,
Тяпук тăванăм, тупата! —

Юман çинчен калаçрĕ тухтăр:
— Аçта иккен вăл арăслан!
Ун пек тĕреклĕ каччă çук-тăр,
Тӳрех калатăп: эп курман...

— Ачи çапла-ха вăл... пĕлетпĕр,—
Текелесе илет тепри.—
Ман хĕрĕм те хама пĕртен-пĕр,
Шăпи телейлĕ пултăр-и! —

Тухтăрпала калаçнăçемĕн
Тяпук чĕрийĕ çемçелет.
Кĕске-çке ĕмĕрĕ этемĕн,
Çапах этем вута сикет.

Çук, кăлăхах сикмен-тĕр каччă,
Вăл пытанман пĕр кĕтесе.
Тяпук нихçан та шутламанччĕ
Нефть пурнăçпа пĕр тан тесе.

Çĕрле палатăра мучимĕр
Çывăраймарĕ шухăшпа:

Хыпса çунать вĕт хĕрнĕ тимĕр,
Чул шăранать хĕрӳ вутпа...

Мучи пăхмасть ак çур çĕре те,
Чĕрне çине пусса кăна
Пĕр пӳлĕме пырса кĕрет те,
Алли тупать телефона.

Ана райкомăн секретарĕ
Ма кирлĕ пулнă-ха çĕрле?
Вăл çавăнта шăнкăравларĕ,
Шăнкăравланă пек киле.

Юман çинчен те хăй çинчен
Пĕлтерчĕ вăл тем хушăра:
— Вышки çунса ӳкнех иккен.
Выртать, тет, манăн пахчара...

Ун вырăнне часрах лартасчĕ
Вĕр-çĕнĕ вышка çавăнта.
Юманĕ пит аван ачаччĕ,
Қаçартăрах мана, ватта.

Эп хам ылхантăм... Пысăк айăп...
Паян илетĕп хам çине.
Ухмах пуçпа пĕлменччĕ лайăх
Назар Юманĕн ĕмĕтне...

**Çӳл ту çинче, çаран çинче,**
**Çарран çӳрессĕм килет...**

Хир хумĕпе çĕкленнĕ пек,
Шăваççĕ пĕлĕтсем катраммăн.
Çак ирĕкре таса çилпе
Епле вара çӳçе турамăн?..

Те сывлăшех çапла юрлать,
Те кайăксем, те хурт-кăпшанкă...
Чĕриклетет, вĕçет, шавлать —
Уй-хир уявĕ мар-ши çакă?!

Туй шавĕпе янранă пек
Илтĕнекен хаваслăхра
Мĕнпур уй-хир анлăшĕпех
Колхоз ыраш̆ĕ сап-сарах.

Çула пытарнă ылтăн хум,
Варсем те хум айнех пытаннă.
Хирте виç хурăн — чаплă тум
Тумланнă арăмсем пек танлă...

Машинăпа ыраш выраççĕ
Кирилепе пĕрле Улька.
Хĕрарăмсем кĕлте çыхаççĕ,
Ырлаççĕ икĕ çамрăка.

Улька лаша тытса пырать,
Леш пăрахать мĕн вырнине.
Тем чул калас сăмах юлать
Хирте хĕрӳ ĕç пур чухне.

— Ывăнтармасть-и, Кириле?..
— Çук, вăл нимех те мар, Улька
Пĕрле каятпăр-и киле?..
— Чим, курăпăр. Каç пултăр-ха...

— Атя, Улька, пĕрле юрлар...
Час çитĕ кĕтнĕ кĕркунне...
— Вара мĕскер?..
— Нимех те мар...
Саватăп савăк каççене...

Кĕрлет машина. Хыҫалта
Ҫĕклем-ҫĕклем ыраш юлать.
Хăй те сисмест, юрла-юрла
Улька хăй шухăшне калать:

«Ҫӳл ту ҫинче, ҫаран ҫинче,
Ҫарран ҫӳрессĕм килет.
Саватăн-и, савмастăн-и —
Ҫавна пĕлессĕм килет...»

Йĕтем ҫинче ҫапаҫҫĕ авăн.
Хĕрсен юрри вĕҫет ҫилпе:
«Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн
Кăштах ҫилĕ вĕрнипе...»

Нефтяниксем бригадипех
Паян ĕҫлеҫҫĕ колхозра.
Кашни кĕлте халь ылтăн пек,
Пуҫтармалла ăна часрах.

Кĕлте парса тăрать Назар,
Ҫĕн молотилка кĕр-кĕрлет.
Тяпук мучи те пит хастар,
Караслă пыл йăтса килет.

Хĕрсем те тырă сăвăраҫҫĕ,
Унтах ун хĕрĕ Кĕтерне.
Каса-каса ҫĕн пыл карасĕ,
Парас килет ҫав кашнине.

Кĕтернене вăл кăчăк туртрĕ:
— Сăйла-ха,— терĕ,—лешсене...
Ҫак сехетрен ман ҫиллĕм мурĕ
Ҫухалтăрах ҫăва тĕпне!

Назар ĕҫленĕ хушăрах
Пуҫ тайрĕ шăппăн Тяпука.

Асӑнас мар ӗнтӗ вӑрах
Ик хушӑри пура-çука!

Тяпукпала Назар, ларса,
Тутанчӗç пыл пӗр чашӑкран
Пыл чашӑкӗ ӑшне сӑпса
Вӗçсе кӗрсе ӳкет таçтан...

* * *

Кӗр çитрӗ — ылтӑн кӗркунне.
Вӑрман çинче вылять хӗлхем.
Карталанса, çуркуннене
Илме каяççӗ тӑрнасем.

Вӗт çумӑр хыççӑн кӑмпара
Çӳреççӗ пирӗн инкесем.
Кӗтӳ анмасть халь тапӑра...
Саралчӗç ешӗл сукмаксем...

Тырра пуçтарнӑ уй-хиртен,
Тӑваççӗ тракторсем çӗртме.
Тӑванкасри çынсем ӗçчен,
Пуçларӗç хӗллене кӗтме.

Кашнин кил-çурчӗ ӑшӑ, çутӑ.
Килес кунсемшӗн ан хӑра,
Тату, илемлӗ, ырӑ, тутӑ
Халь пурнӑç пысӑк ялйышра.

Пӗр эрнерен çитет уяв!
Вуник киле туй кӗмелле.
Тӑванкасра çӳрет йыхрав —
Авланмалла, тет, Кириле.

Паян ялта мӗн иртенпех
Каç пуласса кӗтме пуçларӗç.

Тĕттĕмленсен, çемйисемпех
Тяпукăн пахчине васкарĕç.

Тяпук мучи мăнкăмăллăн
Çӳрет, тин тупнăн канăça:
— Нефть тупасси пит çăмăл-им?
Вăл тикĕт мар вĕт... Ылтăн çав!

Пăхса илет куç хӳрипе
Хăй юлташне — ват Назара.
Ял халăхĕ, хурт-хăмăр пек,
Пуçтарăннă Назар тавра.

Назар курмасть-ха Тяпука,
Шĕлепкине хывса вăл тытнă.
Йĕри-тавра пăха-пăха,
Тем калаçать хăюллăн, хыттăн.

Итлер-ха унăн сăмахне,
Эккей, епле çĕмĕрттерет:
— Паян кунта нефть тухнине
Мĕнпур çĕршывăмăр пĕлет!

Телей сире, тăванкассем!
Эсир халь пысăк пĕр йышра!
Тулли, пуян кĕрекĕрсем
Янравлă пулччăр уявра!..

...Каç пулчĕ, лăпкă-лăпкă каç.
Çĕр айĕнчен нефтьпе пĕрле
Тухать-мĕн пăрăх тăрăх газ —
Çавна-мĕн кĕçĕр чĕртмелле.

Сехет çитсессĕн саккăра,
Шăпланчĕ шӳт, сăмах е кулă.
Пăрăх тăрне çак вăхăтра
Çĕкленчĕ пысăк-пысăк çулăм.

Акатуйри сар тутăр пек
Çап-çутă факел вăркăшать.
Қаçма çинче хăй хĕрĕпе
Пĕр каччă ăшшăн калаçать.

Çӳçеллĕ тутăр пусĕнчен
Хĕр салтрĕ, пачĕ каччине,
Ӳссе çитсе хĕр пуличчен
Уявсенче çеç çыхнине.

— Чĕресенчи юратăва
Пĕрле телейлĕн упрама,
Пĕр-пĕринпе тупа тăвар,—
Кĕтернене калать Юман.—

Ан сӳнтĕр юрату нихçан,
Çак факел пек çутаттăр, çунтăр!
Тăванкассем, эсир паян
Савнисене телей, ыр сунăр!

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

### Сăвăсем

Поэзи хирне ылтăн вăрлăх акать. Умсăмах . . . 5
«Тăван çĕршывăма...» . . 11
Çуралнă çĕршывра . . . . 12
Тăван тавралăхра . . . 15
Юрататăп . . . . . . 17
Нефть . . . . . . 20
Пĕлĕтсем . . . . . . 21
Таркăн çăлĕ . . . . . 22
Тутарстан çулĕсем . . . . 23
Қалаçу . . . . . . 25
Туслăх кӳлли . . . . . 26
Чăваш ачине . . . . 28
Пирĕн ял . . . . . 29
Тĕнче хитре . . . . 30
Ачалăх . . . . . . —
Пĕр ĕмĕрте . . . . . 31
Тăвансем . . . . . 32
Мĕнех-ши вăл телей тени? . 33
Инçет . . . . . . . —
Çурхи каçсем . . . . . 34
Эс айăпсăр ман чĕрере . . 35
Çамрăк чух . . . . . 36
Хуткупăс . . . . . . —
Мăн кĕрӳ . . . . . . 37
Ҳăнара пурăнатпăр . . . 38

Хире тухать . . . . . 40
Эс чипер пуласшăн . . . —
Çумăр хыççăн . . . . 41
Чулсем . . . . . . 42
Сан ăсна илмен пулсан... . . —
Шăлтăртаттăр чашăк-тирĕк . 43
Кунтан кайсан... . . . . 45
Пирĕн вырăн . . . . . —
Пукан . . . . . . 47
Куккук . . . . . . —
Тĕкĕр . . . . . . 48
Çурхи шыв . . . . . —
Тăватшар йĕркен . . . 49
Сăвăç сăмахĕ . . . . 52
Аякри хăй çути . . . 54
Тĕлпулу . . . . . . 55
«Çĕнтĕмĕр килти йывăр-
лăха...» . . . . . 59
Çулсем . . . . . . 60
Утма çул . . . . . 61
Енчĕк . . . . . . 62
Сухаçă . . . . . . 63
Çĕр çаврăнтăр . . . . —
Нумай-и кирлĕ этеме?.. . . 64
Эс вилместĕн . . . . 65
Курнах эсир . . . . . 66
Пичче масарĕ . . . . 67

**Поэмăсем**

Чикĕре . . . . . . 68
Вырăс капитанĕ . . . . 72
Тăванкассем . . . . . 85

**Афанасьев Алексей Андрианович**

**Стихи и поэмы**

На чувашском языке


Редактор **В. И. Антипов**
Художник **В. М. Ширшов**
Художественный редактор **А. А. Афиногенов**
Технический редактор **А. П. Петров**
Корректор **Н. З. Романова**

НТ 30682. Сдано в набор 21/I-1975 г. Подписано к печати 19/VI-1975 г. Формат 70×108 1/32. Бумага типографская № 1. Печатных л. 4,25. Условных печатных л. 5,25. Учетно-изд. л. 5,28. Заказ № 187. Изд. № 76/75. Тираж 1000 экз. Цена 74 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР. Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

Цена 74 коп.

88194